73-232



Антип Николаев

# шавлăр, хурамасем!

Антип
Николаев



# Шавлăр, хурамасем!

очерксем

Чăваш
кĕнеке
издательстви
Шупашкар
1973

С (чув) 2
Н 63

Госу... ...ая
КНИЖ... ...А
Чувашск...
КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
„31“ августа 1973 г.
№

7—6—3
99—73 М

© Чувашское книжное издательство, 1973 г.

# Шавлăр, хурамасем!..

Тăван çĕршывшăн çапăçса пуçĕсене хунă паттăрсене асăнса...



Вăрçă пуçланнă кун ытти кунсенчен нимпе те уйрăлса тăман. Вăл çав тери хитре те ăшă пулас пек туйăнса тăнă. Çынсем яланхи ĕçе пикенме хатĕрленнĕ.

Ирхине ирех, сарă хĕвел шевлине çĕр çине сапалама пуçланă чух, хĕвеланăçĕнчен хура пĕлĕт шуса тухнă. Çук, ку вăл хура пĕлĕт мар, тăшман самолечĕсен мĕлки ялсем çине ÿкнĕ, моторсен шавĕ çынсене пĕлĕтелле пăхтарнă. Çумăр çума пуçланă — çук, ку вăл çумăр мар, тăхлан сывлăшра сăрланă, вилĕм сапнă. Ялсем, хуласем çуннă, ишĕлнĕ, фашистăн тимĕр кĕлеллĕ атти Тăван çĕршыв питне суранлатнă.

Çиçĕмле сарăлнă хыпар çĕршывра аçа çапнă пек кĕрĕслетнĕ. Тăван çĕршыв чиккинче пограничниксен пурнăçĕн хĕрлĕ йĕрĕ юлнă. Ирсĕр тăшман-сăвăса тапса ывăтас тесе, çынсем çĕршерĕн, пиншерĕн хĕвеланăçнелле талпăннă. Кашни килтен фронта салтак утнă, кашни килтен тыла ĕççынни юлнă — ку вăл ман çĕршывăм пĕтĕм ÿт-пÿне хытарса, мăшкăла тÿсеймесĕр, тăшмана хирĕç хăватлăн çĕкленнĕ.

«Çĕклен, çĕршыв, пĕр харăссăн,
Кĕреш мĕнпур вăйпа.
Тискер фашизм çарĕпе,
Ылханлă ордапа!»

Çулсем иртеççĕ, анчах та çак совет салтакĕсен ятне, вĕсен паттăрлăхне пирĕн халăх нихăçан та манмасть, яланах хăйĕн чĕринче усрать.

Вăрçă пуçлансанах, Коля Шупашкар хула военкоматне заявлени çырса парать:

«...Тăшмана ним шеллемесĕр, хамăр паттăр Хĕрлĕ Çар воинĕсем пек, çĕмĕрес тетĕп, Тăван çĕршыва сыхлас тетĕп. Алăсем пăшал тытнă чух, куçсем тăшмана курнă чух, кăкăрта çамрăк чĕре тапнă чух фашистсене хирĕç кĕрешме тупа тăватăп».

Коля Афанасьев ыйтăвне тивĕçтереççĕ. Çав кунах вăл тăванĕсемпе сывпуллашса фронта тухса каять.

...Коля Афанасьева стрелковăй взвода ячĕç. Ик эрне иртен пуçласа каçчен окопсем чаврĕç, чăрмавсем урлă каçма вĕренчĕç, мишеньсем тăрăх печĕç, танксен макечĕсем çине гранатăсем пăрахрĕç.

Акă полигон хыçа юлчĕ. Вăрăм эшелон вĕсене çурçĕре илсе каять. Станцисем, ялсем, вăрмансем вĕлтлетсе иртеççĕ.

Сасартăк поезд чарăнчĕ.

— Строя тухса тăрăр!—илтĕнчĕ команда.

«Товарняк» вăрманта чарăннă. Салтаксем, мĕн пулнине пĕлмесĕр, вагонсенчен тухаççĕ. Малалла колоннăпа шăппăн утрĕç. Никамăн та туртма, шăрпăк çутма юрамасть. Коля Афанасьев патрон ещĕкне йăтса пырать.

Пĕр-икĕ сехетрен канма чарăнчĕç. Тĕттĕм-ха.

Салтаксем апатлансан, вĕсем патне комиссар пырса тăчĕ.

— Эпир халĕ Калинин фронтĕнче,—терĕ вăл.—Пирĕн 22-мĕш çар Городище—Дроздиха—Перлово рубежа хӳтĕлет. Ĕнерхи çапăçура пирĕн боецсем «Победа» хуторне тытса илчĕç. Тăшмана пысăк сиен кӳнĕ. Анчах вăл вăйлăха. Пирĕн задача: фашистсене, кирек мĕнле пулсан та, тытса чармалла. Ан манăр, пирĕн хыçра Мускав...

Часах салтаксем çула тухрĕç. Пурте шăппăн утаççĕ. Çул йывăр: çырма-çатрасем урлă, вăрман витĕр.

Çутăлас умĕн вырăна çитрĕç. Капитан полк командирне шырама пуçларĕ, комиссар 178-мĕш стрелковăй дивизи штабне вĕçтерчĕ. Салтаксене каçчен канма вырнаçтарчĕç.

Каçхине тăруках сивĕтсе пăрахрĕ. Çумăр пĕрĕхет. Афанасьев, пулемет умĕнче выртаканскер, тăтăшах çӳçенкелесе илет. Вăл леш енне, тĕттĕмлĕхе, сăнать: унта нимĕçсем. Пирĕн енне шуса килмеççĕ-и вĕсем тĕмсем хыçĕнчен?

Окопсем умĕнче темиçе пысăк чăрăш. Тсс! Мĕн ку? Çук, йăнăшмасть Афанасьев. Пĕр чăрăш хыçĕнче маск-

халат тăхăннă çын куранса кайрĕ. Нимĕç! Акă вăл каллех йывăç хыçне пытанчĕ.

Коля тинкерет. Паллă: тăшман разведчикĕ, ун хыççăн. ав, тата темиçен...

Афанасьев пулемета витнĕ брезента хăвăрт сирсе пăрахать те прицел çине пăхать, унтан пĕр черет шăтăрттаттарса илет. Нимĕç разведчикĕ йывăç хыçне пытанчĕ. Кăшт тăрсан вăл каллех асăрхануллăн тухса тăчĕ. Коля ăна тепре çунтарса илчĕ. Патрон ленти пĕтичченех печĕ. Хăвăрт çĕнĕ лента лартрĕ те каллех ĕçе пикенчĕ. Юлашкинчен нимĕç тинех тĕшĕрĕлсе анчĕ.

— Аха, лекрĕн-им?—савăнчĕ Афанасьев.—Каçарăпăр сана, кĕтсех тăр!

«Эпĕ вĕлернĕ пĕрремĕш тăшман»,—шутласа илчĕ Афанасьев.

Часах унăн юлташĕ Чекменев килсе çитрĕ.

— Иван Поликарпович, ав çавăнта тинкеререх пăхăр: пĕр нимĕç иртесшĕн пулчĕ,—асăрхаттарчĕ Коля.

— Юрĕ, куçа вĕçертмĕп,—терĕ лешĕ.

Ирхине Афанасьева черет тиврĕ. Чекменев шăппăн кăна, ыттисем ан илтчĕр тесе, Кольăна çапла пĕлтерчĕ:

— Нимле нимĕç те пулман вĕт, ачам!

— Мĕнле пулман? Хам куçпа хам куртăм та!

— Чăнах та пулман,—кулса илчĕ Иван Поликарпович.—Хăвах курса ĕнен.

Афанасьев пăхрĕ. Пăхрĕ те — пичĕсем хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайрĕç: леш чăрăш патĕнче, тăшман разведчикĕ пытаннă тĕлте, пĕр турат çĕре перĕничченех çакăнса тăрать. Тĕттĕмре Коля шăпах çав турата çын тесе шутланă ĕнтĕ. Турачĕ вара çап-çара тăрса юлнă: Коля пулеметпа ăшалантарнă çке-ха!

## Ярцево-Духовщина

1942 çулхи ноябрь-уйăхĕнче дивизи задани илет: тăшманăн Ржев районĕнчи хӳтĕленӳ линине татмалла та Ярцево-Духовщина рубежне тытса илмелле.

Шăп çакăнта ĕнтĕ Коля Афанасьев пĕрремĕш хут çапăçăва кĕрет.

Командованин приказне пурнăçлама сассăр атакăлама шутларĕç: артиллерисĕр, çутăсемсĕр, кăшкăрмасăр. Унта вара пĕтĕм дивизи хутшăнмалла! Ун пекки пулманччĕ-ха.

Çак харсăр шухăша пурнăçлама çăмăл мар. Çитмен-

нине тата полксемпе тăшманăн малти позицийĕсем хушши икĕ километра яхăн. Ăна пĕтĕмпех хырăмпа шуса тухмалла. Тӳрем уçă вырăн. Ниçта хӳтлĕх çук.

Штурм пуçланиччен пĕр кун кăна юлнă. Пурне те тĕплĕн хатĕрлесе çитермелле. Ун пек чухне нимĕнле пĕчĕк япалана та манма юрамасть. Кама та пулин çанă çине çыхмалли шурă хăю паман, тейĕпĕр. Нимех те мар-и? Çук çав. Çĕрлехи атакăра тата алă вĕççĕн çапăçнă чухне ун пек хăю пулманни вилĕмпе пĕрех. Сана ăçтан палласа илĕн-ха! Е тата разведка кăшт та пулин йăнăшнă тейĕпĕр. Паллах, ку вăл кайран пысăк инкек кӳме пултарать.

— Çав кун,—каласа парать дивизи командирĕ пулнă, халĕ запасри генерал-майор Кудрявцев,—диверсипе разведка ушкăнне эпĕ хам хатĕрлерĕм, разведка начальникĕ хăй пĕлекен сведенисене тепĕр хут тĕрĕслерĕ, штабри ытти работниксем, полк, батальон, рота командирĕсем тата политработниксем вара отделенисем, минометсемпе пулеметсен расчечĕсем тăрăх саланчĕç. Кун каçиччен дивизи пĕрре те пемерĕ.

Ун чухне Коля Афанасьев та чылай тар юхтарнă — вăл взводри агитатор пулнă-çке-ха. Вăл боецсене умри задачăсем çинчен ăнлантарса панă, боевой листок кăларнă, хăйпе пĕр полкри снайпер Совет Союзĕн Геройĕ Салават Каримов пек хăюллă пулма, унран вĕренме хавхалантарнă.

— Нимĕç офицерĕ,—ăнлантарнă вăл çамрăк салтаксене,—совет хĕрарăмĕн пĕчĕк ачине амăшĕн аллинчех прикладпа çапса вĕлернĕ. Ун чухне Салават разведчик пулнă. Çак офицера вăл кирек мĕнле пулсан та шыраса тупма шутланă. Гаврилов боецпа пĕрле вăл шырама тухса каять. Çула май вĕсем часовойсене «илнĕ», çуртсене кĕрсе фашистсене автоматран пере-пере вĕлернĕ. Тупаç-тупаççех вĕсем бандит-офицера. Тупаççĕ те ача амăшĕ патне илсе пыраççĕ.

— Çакă-и?—ыйтать Салават, хĕрарăма автомат тыттарса.

— Çакă, ирсĕр,—ответлет хĕрарăм.

Малалла Коля фронтовиксене Каримов хăй пĕччен 152 гитлеровеца леш тĕнчене ăсатни çинчен каласа парать. (Салават Каримов Тутар республикинче Янгильдино ялĕнче çуралнă.)

Наступление кайма вăхăт çитет. Афанасьев хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле виçĕ сехет хушши ĕнтĕ тăшман патне хырăмпа пĕр сассăр шуса пырать.

Çур çӗр иртсе икӗ сехет тӗлне подразделенисем тăшман окопӗсенчен виççӗр метрта кăна. Лере, йӗплӗ пралук леш енче,—тăшман. Хăрушлăх çинчен вăл нимӗн те туймасть.

Çур сехет канчӗç боецсем, сигнал пуласса кӗтрӗç. Саперсем çеç кӗтмерӗç сигнала: вӗсем пехота валли çул уçаççӗ, йӗплӗ пралуксенчен, минăсенчен тасатаççӗ.

Икӗ сехет те вăтăр минут. Ту хысакӗ çинче тăвата тӗлте кăвайт çунма пуçларӗ. Ку диверсипе разведка ушкăнӗн ӗçӗ. Вӗсем, тăшман тылне нимӗçсен бронемашинипе (ăна темиçе кун каялла Селищево ялӗшӗн çапăçнă чухне тытса илнӗччӗ) пырса кӗнӗ те виçӗ танкне вут хыптарнă.

— Акă вăл, кӗтнӗ сигнал,—савăнчӗ Коля.

Дивизи полкӗсем, йӗплӗ пралуксем витӗр тухса, тăшман траншейисене вирхӗнсе кӗреççӗ. Никам та пӗр сас кăларман: штык çеç хуçаланнă.

Сасартăк хăватлăн янăраса каять:

— Ур-ра-а-а!

Ир тӗлне боецсем, Ярцево-Духовщина рубежа тытса илсе, малалла наступлени кайрӗç.

## Çунтар, Коля!

— Афанасьев, тăр! Илтетӗн-и!—хулпуççинчен лăскать Кольăна Чекменев.

Коля хăвăрт сиксе тăрать те землянкăран тухать. Йӗри-тавра тӗтӗм йăсăрланать. Унта та кунта çулăм ялкăшса илет, осколкăсем шăхăраççӗ. Пӗшкӗнсе, Афанасьев пулемет патне чупрӗ. Иван Поликарпович Чекменев пӗр вӗçӗмсӗр шатăртаттарать.

— Кӳр-ха мана!—тет те Коля, пулемет умне тăсăлса выртать.

— Пер хăвăртрах!—чăтса тăраймасть Чекменев. Коля шăпăртах. Тӗмсем хыçӗнчен хура мӗлкесем çӗкленсе малалла васканине вăл лайăх курать. Афанасьев кӗтет. Фашистсем, хăюланса, ура çинех çӗкленчӗç, темӗн кăшкăрашса, пирӗн еннелле чупма пуçларӗç. Коля вăраммăн персе илчӗ. Темиçе фашист тӳрех çӗре тӗшӗрӗлсе анчӗ.

— Çапла кирлӗ вӗсене, çапла-а!—кăшкăрать Иван Поликарпович. Анчах ун сассине снарядсем кӗрӗслетни хупласа хурать. Пуç çийӗн минăсем, снарядсем шăхăрса иртеççӗ. Вӗсем шăпах фашистсем выртнă тӗле ӳксе çурă-

лаççĕ. «Вăрçă турри» кирлĕ вăхăтра пулăшăва килсе çитрĕ.

Икĕ боецпа пĕр офицера (вăл телефон трубкине тытса тем кăшкăрать), Афанасьевпа Чекменев часах асăрхаймарĕç. Вĕсем полк артиллери корректировщикĕсем пулнă иккен.

Сылтăм енчен пĕр пысăках мар салтак сиксе тухрĕ. Винтовкăпа. Ун хыçĕнче тăпрапа тĕтĕм купи çĕкленчĕ. Салтак куçран çухалчĕ.

— Эх, айванскер,—тарăхса илчĕ Афанасьев.

Кĕтмен çĕртен пĕтĕмпех шăпланчĕ.

— Куратăн-и?—аякĕнчен тĕкрĕ Афанасьева Чекменев,—хайхи леш салтак мар-и?

Винтовкăллă салтак, нимĕçсем патне кайма тăнăскер, халĕ каялла таврăнать. Темле хăяккăн утать хăй.

— Темскер сĕтĕрет,—тĕлĕнчĕ Афанасьев.

— Чăнах га,—хумханчĕ Чекменев.

Салтак пĕр фашиста çухинчен сĕтĕрсе килет иккен, лешĕ нимĕн те хирĕçлемест тата.

— Пулăшăр-ха, шăпăрлансем!—аллисемпе сулчĕ аякранах салтак. — Питĕ йывăр, сысна.

Тинех Коля салтака палласа илчĕ: ара, ку Петр Комаров разведчик вĕт. Ĕнер кăна-ха Коля унпа пĕрле консерва çинĕччĕ.

Комаров сĕтĕрсе килнĕ фашист, хăранипе, нимĕн те калаймасть, пуçне çеç сулкалать, аллисемпе темле паллăсем кăтартать.

Тепĕр темиçе кунтан пулеметчиксем пĕлчĕç: гитлеровецсем «чĕлхе» тытма шутланă имĕш, анчах хăйсен «чĕлхи» пире лекет.

— Пăхатăп, тĕм хыçĕнче фриц выртать, — каласа пачĕ кайран Комаров,—пуçне пытарнă, хăй пĕтĕмпех курăнать. Эпĕ лектертĕм вара ăна. Пытăм та: «Хэнде хох!»—тесе кăшкăртăм. Çухинчен ярса тытрăм та çĕклерĕм. Йывăр, шуйттан, пĕр пилĕк пăт та пулĕ.

## Сержантсен шкулĕнче

*(Афанасьев çырнинчен.)*

— Ирхи апат хыççăн манпа Юдина рота командирĕ патне чĕнтерчĕç. Пирĕнпе батальон штаб начальникĕ калаçрĕ, служба çинчен ыйтса пĕлчĕ. Юлашкинчен пире хăвăртрах дивизи штабне кайма хушрĕ.

— Сире сержантсен шкулне ярас терӗмӗр. Направлени илӗр те пирӗн 43-мӗш ҫар штабне, разведка начальникӗ патне,—ăнлантарчӗ штаб начальникӗ.

Эпир салтаксемпе тата командирсемпе ăшшăн сывпуллашрăмăр. Асатнă чухне пире Михаил Иванович Сафронов командир ҫапла каларӗ:

— Сăлтавсăр ҫулăм ăшне кӗме, паттăрланма ан тăрăшăр. Кирлӗ пулсан вара, пуринчен малтан кӗрӗр. Вилӗм кӗтет пулсан та...—Пире чылайччен тинкерсе пăхрӗ. Унтан:—Эх, ыталам-ха сире, тăванăмсем!

...Кас енне эпир Н. ялне ҫитрӗмӗр. Разведчиксем патне кӗтӗмӗр. Пысăках мар землянкăра салтаксенчен пӗри майӗпен юрлать:

Бьется в тесной печурке огонь,
На поленьях смола, как слеза,
И поет мне в землянке гармонь:
Про улыбку твою и глаза...

Кунӗ-кунӗпе эпир разведчик пулма вӗренетпӗр. Касхине вара, шăннă та ывăннăскерсем, ăшă землянкăна ҫитсе ӳкетпӗр. Апатланатпăр. Ҫывăрма иртерех-ха. Кăмака ҫывăхнерех пырса ларатпăр, пирус мăкăрлантаратпăр. Тытăнатпăр вара каласма. Тепӗр чухне юрă хăех ҫуралать. Ытларах Алексей Сурковăн «Землянкине» юрлатпăр. Питӗ килӗшет вăл фронтовиксене.

Кайăк сисмелле мар утасси, нимӗҫ часовойне сассăр пуҫтарасси, ҫӗрле компас тăрăх ҫӳресси, тăшман тылӗнче шавсăр та хăюллăн кӗрешесси... Акă мӗне вӗрентрӗҫ пире сержантсен шкулӗнче.

Юлашкинчен пиртен кашниййӗ разведчик профессине хăнăхса ҫитрӗ.

Шкултан вӗренсе тухсан пире хамăр дивизиех ячӗҫ. Разведка начальникӗ Иван Кондауров капитан кӗтсе илчӗ. Соединенире ун чухне шăпах сержантсен шкулне йӗркелетчӗҫ. Мана вара тӳрех ҫав шкула ячӗҫ. Юдин — ман помощник. Ҫапла эпир уйрăм вӗренӳ батальонне лекрӗмӗр. Командир ҫавах — Сафронов.

Подразделение эпир кăнтăрла иртсен пытăмăр. Лайăх йышăнчӗҫ. Ахăртнех, кӗтнӗ курăнать.

## Тăшман тылӗнче

— Разведчиксен пурин те канмалла, ҫӗрле вара — «чӗлхе» тытма!—килсе пӗлтерчӗ рота командирӗн связнойӗ.

Ҫаҫхине пурте пысăк землянкăна пухăнчĕҫ. Командир задани ҫинчен ăнлантарса пачĕ: кирек мĕнле пулсан та, «чĕлхе» тытса килмелле.

Батальонри штаб начальникĕн помощникĕ разведчиксене ушкăнсем ҫине пайларĕ. Афанасьев хӳтĕлекенсен ушкăнне лекрĕ.

Часах салтаксем ҫула тухрĕҫ. Малта — Башкиров лейтенант саперĕсем, вĕсем хыҫĕнчен — разведчиксем.

— Акă команда: тапăнакан ушкăнăн сылтăма кайса вырттмалла, хӳтĕлекенсен ушкăнĕн ҫулран сулахаялла вырттмалла,—каласа парать запасри сержант Сидоров.— Выртрăмăр: кĕтетпĕр. Вăхăт тăрăх тапăнакансен ушкăнĕ ĕҫе тытăнмалла та ĕнтĕ.

Пилĕк, вунă минут иртет. Тапăнакансем ҫав-ҫавах нимле сигнал та памаҫҫĕ-ха. Мĕн те пулин сиксе тухмарĕ-ши? Пулма пултараймасть: йĕри-тавра шăп. Тата темиҫе минут иртет. Кĕтмен ҫĕртен малта граната ҫурăлса кайрĕ, нимĕҫсен пулемечĕ чыхăнса каясла пеме тапратрĕ. Манпа юнашар выртакан Коля Афанасьев юр ăшне варăнма васкарĕ.

Тӳпене ракетăсем ҫĕкленчĕҫ. Тăшман пире мĕнпур хĕҫпăшалтан ăшалантарма пуҫларĕ. Эпир те перетпĕр. Пире хамăр артиллеристсемпе минометчиксем хӳтĕлеме тытăнчĕҫ.

Тапăнакансен ушкăнĕ часах каялла чакрĕ. Вĕсем хыҫҫăн эпир те шурăмăр.

Операци ăнчĕ: «чĕлхе» лекрĕ-лекрех. Ҫухату та пулчĕ пирĕн: каялла чакнă чухне взвод командирĕн помощникне (вăл тапăнакансен пĕр ушкăнне ертсе пыратчĕ) вĕлерчĕҫ.

«Чĕлхене» мĕнле майпа лектерни ҫинчен Чекменев разведчик каласа парать:

— Фашистсен малти позицийĕ патне шуса пытăмăр хайхи. Минăсене илтĕмĕр. Траншейăна сикес тенĕччĕ кăна:

— «Хальт!»—тени илтĕнсе кайрĕ. Нимĕҫсен часовойĕ хăранипе кăшкăрса янă иккен. Часовоя урăх палкаттармарăмăр, паллах. Эпĕ ăна ярса тытрăм та ҫăварне ҫанăпа пăкăласа хутăм. Унтан ăна ытти ачасем ҫĕклесе кайрĕҫ. Эпĕ вĕсем хыҫҫăн. Куратăп: юр айĕнчен темскер курăнать. «Тунката пулĕ»,—шутлатăп хам. Ҫук, тунката мар: хушăран хушă ҫулăм тухни палăрать. Труба! «Ак ăшалантарам-ха эп сире»,—терĕм те пĕр граната вăркăнтартăм. Унтан тӳрех каялла тапса сикрĕм...

## Иван Гречкин дневникĕнчен

Иван Григорьевич Гречкин салтак Сафронов подразделенийĕнче пулеметчик, каярахпа разведчик пулнă. Халĕ вăл Саратов облаçĕнче пурăнать. Вăрçă вăхăтĕнче вăл хăй курни-илтнисем çинчен дневник çырса пынă. Унта Коля Афанасьев çинчен те асăннă. Акă дневникри страницăсем.

* * *

Шартлама сивĕ. Пуçра пĕр шухăш çеç: ăçта ăшăнмалла-ши? Пирĕн салтаксен «хваттерĕ» пулемет вырăнĕнчен инçех мар. Çиелтен чăрăш тураттисемпе витнĕ — вĕсем тĕтĕме тытса чараççĕ. «Сивĕ алăк» — плащ-палатка.

Мĕнле сивĕ пулсан та, ман юлташ Коля Афанасьев кашни ирех сухалне хырать.

— Коля, мĕн мур тума хырăнатăн,—тет вара Комаров.—Сухалпа е сухалсăр леш тĕнчене лекни пĕрех мар-и саншăн?

Афанасьев кулкаласа çеç илет.

— Çын кирек хăçан та çын пек пулмалла. Çавăнпа ĕнтĕ вăл çĕр çинче пурăнать те...

* * *

Вăрманти уçланкă тăрăх пирĕн малти позици иртет. Лутра йывăççем. Хушăран пысăк чăрăшсемпе яхтăсем те курăнкалаççĕ. Вĕсене нимле çил-тăман та хăрушă мар пек. Анчах вĕсене те вăрçă суранлатнă: пĕрисем кăмрăкланнă, теприсен тăррисене татса кайнă. Çилпе суллана-кан туратсем çине пăхатăн та, йывăççем йынăшнă пек, макăрнă пек туйăнать.

* * *

Çав кун Афанасьев отделенине нимĕççен ялне сăнама хушнăччĕ. Темле тинкерсе пăхсан та сержант нимĕн те асăрхамарĕ. Калăн, пурте вилсе пĕтнĕ тесе. Анчах пырса тĕкĕн-ха — çийĕнчех тăхланпа кĕтсе илеççĕ.

Эх, тарăхатăн-çке: эпир, çак çĕр хуçисем, нӳрлĕ окопсенче шăнатпăр, вăл вара, фашист, пирĕн ялта, хăйĕн килĕнчи пек, ăшăра ларать. Ăçта? Россия варринче. Мĕнле пулма пултарчĕ-ха ку?

Сафронов лейтенант килчĕ.

— Мӗн ҫинчен шутлатӑн, тӑванӑм?—ыйтать.

— Мӗншӗн кунта эпир, мӗншӗн Германире мар?

Михаил Иванович Коля ҫине тимлӗн пӑхса илчӗ, анчах ним те каламарӗ. Кӑшт тӑрсан:

— Эпӗ ун пирки час-часах шутлатӑп. Ӑҫта та пулин эпир те мӗн те пулин асӑрхамасӑр хӑварнӑ ахӑртнех... Чӗрӗ юлсан, пӗлӗпӗр-ха. Халӗ вара пирӗн, тӑванӑм, урӑх хи ҫинчен шутламалла. Кӑлӑпӑр, ӑна ҫавӑнтан мӗнле тапса ывӑтмалла,—лейтенант нимӗҫсем вырнаҫнӑ ял ҫинелле тӗллесе кӑтартрӗ.—Ывӑтасса пурпӗрех ывӑтатпӑр.

* * *

Ҫутӑлас умӗн ротӑна ирхи апат илсе пычӗҫ. Ҫутӑ чухне тӑшман пирӗн позицисем патне пымалли вырӑнсене персе тӑрать. Ҫавӑнпа та тӗттӗм чухнех кашни взводран темиҫе салтак тыла продуктсем илме каяҫҫӗ.

Паян Афанасьев сержант отделенине черет ҫитрӗ. Тыла кайма сержант Василий Игнатовпа Тасбулат Курманбаев рядовойсене хушрӗ. Апат ӗлкӗрейменччӗ-ха. «Вутӑ типӗ мар, ниепле ҫунмасть!»—ӑнлантарчӗ повар. Ялан хинчен каярах юлса таврӑнма тиврӗ. Ҫурӑм хыҫӗнче — термос, алӑра — рюкзак.

Уҫӑ вырӑна тухнӑччӗ кӑна — нимӗҫсен пулемечӗ шатӑртатма пуҫларӗ. Ҫийӗнчех юр ӑшне чӑмрӗҫ. Малалла хырӑмпа шума тиврӗ.

Курманбаевпа Игнатов тавра пульӑсем шӑхӑраҫҫӗ. Салтаксем малалла шӑваҫҫӗ-ха. Сасартӑк пӗр пуля термоса пырса тивет. Курманбаев шӑтӑка шуса анать те термосне тӗрӗслет. Ҫапла: термос шӑтнӑ, унтан вӗри яшка пӑсланса юхать. Мӗн тумалла? Тасбулат ҫухалса каймасть. Ҫийӗнчех пурттенкине салтса илет те унпа термос «суранне» ҫыхса хурать.

Ҫапла вара вӗсем хамӑр вырӑна йӗркеллех ҫитрӗҫ.

* * *

Кӑнтӑрла фашистсем артиллерирен вӑйлӑ пеме пуҫларӗҫ. Халиччен ун пекки пулманччӗ-ха. Пӗр вун-вунпилӗк снаряд пӑрахатчӗҫ те чарӑнатчӗҫ. Паян вара пирӗн подразделение атакӑлама шутларӗҫ пулмалла. Котелоксене пӑрахсах, салтаксем тӑшмана кӗтсе илме хатӗрленчӗҫ.

Йӗри-тавра снарядсем кӗрӗслетеҫҫӗ. Тар шӑрши. Шӑннӑ ҫӗр татӑкӗсем ҫурӑмсем ҫине ыраттармаллах тӑкӑнаҫ-

çĕ. Винтовкăсемпе пулеметсене çĕрпе хупласран плащ-палаткăсемпе, шинель аркисемпе витрĕмĕр: хĕçпăшала куç шăрçинчен те лайăхрах сыхламалла.

Сабантуй (çапла ят пачĕ артиллери пенине Коля Афанасьев) сасартăк чарăнчĕ. Коля ури çине çĕкленчĕ, силленчĕ. Пăхать — траншея тăрăх Леонид Пастухов рядовой килет. Сулахай аллине айккинелле тăснă.

— Мĕн, амантăн-им?—ыйтать Коля.

— Шăйăрса кайрĕ пăртак,—терĕ Леонид, шăлне çыртса. Унăн пӳрни вĕçне осколок татса кайнă иккен. Пулать вĕт... Афанасьев хăвăртрах пакет туртса кăларчĕ те салтак аллине çыхса ячĕ.

* * *

Ирхи апат çирĕмĕр. Пирĕн подразделенири салтаксем канаççĕ, чĕлĕм мăкăрлантараççĕ, калаçаççĕ, кулаççĕ, шӳтлеççĕ.

Çак самантра Сафронов лейтенант килсе çитрĕ. Пĕччен мар, рота командирĕпе. Эпир хĕсĕнтĕмĕр те вĕсене вырăн патăмăр. Рота командирĕ пирĕн шухăш-кăмăлсем çинчен ыйтса пĕлчĕ. Совинформбюро сводкине пĕлтерчĕ: пирĕннисем нимĕçсене Сталинград патĕнче мăкăрлантараççĕ иккен. Юлашкинчен çапла ыйтрĕ:

— Кам сирĕнтен «чĕлхе» тытма каясшăн, юлташсем?

Афанасьев отделенийĕ пĕтĕмпех — Василий Игнатов, Леонид Пастухов, Тасбулат Курманбаев, Николай Юдин тата ыттисем те — тӳрех килĕшрĕç.

Анчах офицерсене батальон командирĕ патне чĕнтерчĕç. Рота тата взвод командирĕсем хăвăрт кайрĕç. Салтаксем вара «чĕлхе» çинчен калаçма тапратрĕç.

Каçхине йĕпе юр çума пуçларĕ. Йĕри-тавра нимĕн те курăнмасть. Эпир винтовкăсене тепĕр хут тасатса çу сĕртĕмĕр. Гранатăсем хатĕрлерĕмĕр. Анчах темшĕн паян «чĕлхе» тытма ямарĕç. Афанасьевпа унăн разведчикĕсем кӳренчĕç: питĕ каясшăнччĕ-çке-ха вĕсем.

Тепĕр кунне кăнтăрла Афанасьева (халĕ вăл взвод командирĕн помощникĕ) тата Пастухова (агитатора) Сафронов лейтенант чĕнтерчĕ.

— Акă мĕн, юлташсем,—терĕ лейтенант,—пире валли тылран темиçе посылка ярса пачĕç. Вĕсенчен пĕрин çине çапла çырнă: «Чи хăюллă салтака». Акă вăл, пăхăр. Сирĕн шутпа, кама памалла ăна?

— Тасбулат Курманбаева,—тӳрех пĕлтерчĕç развед-

чиксем. Коля Афанасьев та çапла шутларĕ: ан тив, вăрçăра ашшĕне çухатнă салтака посылка кăшт та пулин лăплантартăр. Юлташĕсем ăна чи хăюллă воин тесе шутланине шута илтĕр.

Салтаксем взвод командирĕн землянкине пухăнчĕç. Сафронов лейтенант Курманбаева чĕнсе илчĕ те посылка çинчи адреса майĕпен вуларĕ, ăна Тасбулата тыттарчĕ. Курманбаев кăмăллăн кулса илчĕ. Чылайранпа кулманччĕ-ха вăл.

— Тасбулат, уç-ха хăвăртрах посылкуна, — сырса илчĕç ăна юлташĕсем.

Посылкăра — шурă сухари, премĕк, табак, тĕрленĕ енчĕк тата çыру. Тасбулат çырăва çепĕççĕн сарса якатрĕ те вулама тытăнчĕ:

Тахăшĕ чăтса тăраймарĕ:

— Эсĕ сасăпа вула, пурте илтчĕр!

Курманбаев килĕшрĕ.

«Сывă-и пичче, чи хăюллă салтак?

Ку çырăва сире палламан хĕрача Нина Чăваш республикинчи Çĕмĕрле хулинчен çырать. Салтак пичче, эпир аннепе тата асаннепе пĕр пĕчĕк посылка пухрăмăр та пурсăмăр та сире ярса паратпăр. Килĕшрĕ-и вăл сире, пичче, çырса пĕлтерĕр. Урăх нимĕн те яраймастпăр эпир...

Эпĕ улттăмĕш класра «тăваттăпа» тата «пиллĕкпе» вĕренетĕп. Уроксем хыççăн аннепе асаннене пулăшатăп, магазина карточкăсемпе тавар илме çӳретĕп, шыв йăтатăп, çулла пахча чаватăп.

Пичче, эсĕ чи хăюллă салтак! Пирĕн питĕ пысăк ыйту пур: фашиста персе вĕлер. Эпĕ тата аннепе асанне питĕ ыйтатпăр. Ман аттешĕн тавăрăр. Ăна аса илсен, манăн куçран куççуль юхать...»

Тасбулат вуласа пĕтерчĕ. Салтаксем чылайччен чĕнмесĕр ларчĕç. Юлашкинчен Коля Афанасьев, ассăн сывласа, çапла каларĕ:

— Питĕ аван. Манăн янташсем çыраççĕ... Çапла, куçран куççуль хăех тăкăнать.

Курманбаев çырăва типтерлĕн хуçлатрĕ те гимнастерка кĕсйине чиксе хучĕ.

## „Чĕлхе" тытма

Коля Афанасьев тăшман тылне «чĕлхе» тытма кайни çинчен дивизи штабĕн офицерĕ Ашот Мкрчан каласа пачĕ, халĕ вăл Арменире пурăнать. Разведчиксен ушкăн-

не заданине кайма Ашот хӑй хатӗрленӗ, ҫавӑнпа та вӑл пирӗн янташа та лайӑх астӑвать. Акӑ мӗнле пулса иртнӗ ун чухне.

...Разведка отделенийӗн командирне Захар Лыщеня старшинана ирхине уйрӑм вӗренӳ батальонӗн командирӗ чӗнчӗ. Хӑйне штаба мӗншӗн чӗннине пӗлме те ӗлкӗрейменӗ—землянкӑна дивизи командирӗ Кудрявцев генерал-майор вирхӗнсе кӗчӗ.

— Мӗне пӗлтерет ку, миҫе кун ӗнтӗ эсир «чӗлхе» тытаймастӑр, тӑшман орудийӗсем ӑҫта вырнаҫнине пӗлейместӗр,—хӗрӳленсе кайрӗ командир.—Ҫар командующийӗ мана ҫапла асӑрхаттарчӗ: ҫак хӑямат ялне илеймесен, пире япӑх пулать.

Мӗн калас тенине каласа пӗтерчӗ те кӑштах лӑпланчӗ. Унтан ҫапла ыйтрӗ:

— Мӗн тӑвӑпӑр, ӑҫтан переҫҫӗ вӗсем, ӑҫта вырнаҫнӑ?

Пӗр хушӑ никам та ним те чӗнмерӗ.

— Тем пекех тӑрӑшрӑмӑр,—сӑмах хушрӗ вӗренӳ батальонӗн командирӗ.—Тӑшман ҫӗр айне кӗрсе ларнӑ, ниҫта та тупма ҫук. Разведчиксене тепӗр хут яма тивет.

Дивизи командирӗ комбат ҫине пӑхса илчӗ.

— Яма юрать. Анчах кам кайӗ? Полкри разведчиксем пултараймаҫҫӗ. «Чӗлхе» тупса килӗҫ-ха, анчах тӗллеве пурнӑҫлаймӗҫ... Ҫук, палӑртаймӗҫ.

— Лыщеня старшина ертсе каять ушкӑна. Вӑл батальонри разведка взвочӗн командирӗн помощникӗ. Унпа пӗрле ҫамрӑк разведчиксене ярас пулать. Ыттисем эрне ытла ӗнтӗ ҫарти разведка начальникӗн распоряженийӗнче.

— Ҫапла тӑвӑпӑр эппин.

Сӗм-ҫӗрле виҫӗ разведчик шӑппӑн ҫула тухрӗҫ. Вӗсенчен пӗри часах аманчӗ те каялла таврӑнчӗ.

Лыщеня старшинапа Афанасьев ҫур ҫӗр тӗлне тӑшман позицийӗ патне ҫитрӗҫ. Гитлеровецсен орудийӗсем ӑҫта вырнаҫни ҫинчен кӑштах каласа ӑнлантарнӑччӗ. Вӗсен вара тӑшманӑн артиллерипе миномет батарейисем ӑҫта вырнаҫнине тӗрӗс пӗлмелле.

— Ну,—терӗ старшина,—халӗ чи йывӑрри.—Вӑл карттӑ туртса кӑларчӗ, хӑйсем ӑҫта вырнаҫнине палӑртрӗ.

— Ҫапла. Пурте тӗрӗсех,—мӑкӑртатрӗ Лыщеня.—Апла пулсан, артиллери батарейи инҫерех те сулахайра, миномет батарейи вара таҫта ҫывӑхрах. Унтан пуҫлӑпӑр эппин.

Разведчиксем асӑрханса малалла кайрӗҫ. Пӗр виҫҫӗр метр шусан, палӑртнӑ ҫул ҫине тухрӗҫ те ун тӑрӑх утрӗҫ.

Çул вĕсене çырмана илсе çитерчĕ. Выртрĕç те тинкере пуçларĕç.

— Тăхтăр-ха,—терĕ старшина Афанасьева.—Эпĕ аяла анса пăхам.

Мĕн чухлĕ вăхăт иртрĕ—калама хĕн. Сасартăк темĕн çатăртатса илчĕ, унтан пăшлатни илтĕнчĕ, ун хыççăн тӳпене ракета çутатса ячĕ. Коля çĕр çумне лăпчăнчĕ. Пĕр минут, тепре иртрĕ. Анчах тăшман çаплипех шăп-ха. Афанасьев тата хытă пăлхана пуçларĕ. Захар килмесен мĕн тумалла? Сывлăша каллех ракета çĕкленчĕ. Çав вăхăтра Афанасьев хăйĕнчен сулахай енче темле мĕлке асăрхарĕ. Çанçурăм сӳлетсе илчĕ: старшина сылтăм енчен килмеллеччĕ-çке. Апла пулсан, ку — тăшман. Ракета сӳнчĕ. Коля темле сас çывхарнине аванах туйрĕ. Паллă, ун патне такам килет. Афанасьев автомата хыттăн чăмăртарĕ, анчах çийĕнчех тавçăрса илчĕ: пеме юрамасть. Пĕр сас кăлармасăр, шăппăн тапăнмалла. Сержантсен шкулĕнче вĕрентнĕ пек, батальон командирĕ, инструктор каланă пек. Кĕтмелле, çывăха ямалла, унтан сиксе тăмалла та прикладпа çавăрса çапмалла...

## Тăшманпа куçа-куçăн

Артиллери батарейине разведчиксем çăмăллăнах шыраса тупрĕç. Вăл ял хĕррине вырнаçнă иккен. Шăп çав яла ĕнтĕ пирĕн стрелковăй батальон ниепле те илеймест. Лыщеня ăна карттă çине паллă турĕ.

Халĕ нимĕçсен штабне тупмалли çеç юлчĕ. Вăл ялта вырнаçнă пулмалла-ха.

Захар ăнланать: яла фронт енчен пырса кĕме çук, çаврăнăç çулпа кайма тивет. Разведчиксем сылтăма пăрăнчĕç те вăрман патнелле васкарĕç. Унтан сулахаялла пăрăнчĕç те тӳрех уттарчĕç. Тăшман йышăннă ял сулахайра юлчĕ.

— Коля,—темиçе хут та асăрхаттарчĕ старшина,—çула астуса юл. Ялтан çак çул вăрмана каять, унпа тӳрех хĕвелтухăçнелле утсан, хамăрăннисем патне тухатăн.

— Мĕншĕн ун пек калатăр, старшина?—ыйтрĕ Афанасьев.

— Вăрçăра тем те пулма пултарать.

Разведчиксем, инçетрен çаврăнса, каллех ял патне пырса тухрĕç, анчах хальхинче пачах тепĕр енчен.

Паçăрхи пекех шăп. Разведчиксем пырса чарăннă çурт

вёçех ишёлсе пётнё. Ăна йĕри-тавра пăхкаларĕç те малалла утрĕç.

— Шăп, — асăрхаттарчĕ старшина, тăпах чарăнса.

Тăнларĕ. Хĕвеланăçĕнчен ăшă нӳрек çил вĕрет.

— Куратăн-и?—ыйтрĕ старшина, çул урлă ларакан çурт çине кăтартса.

Пĕр хутлă кирпĕч çурт умĕнче часовой каллĕ-маллĕ утса çӳрет. Разведчиксем ăна чылайччен сăнаса выртрĕç. «Мĕнле тытса илме пулать-ши ăна?»—шутларĕ Лыщеня. Фашистсен йĕркине пĕлнĕ вăл: çирĕм утăм — малалла, çирĕм утăм — каялла! Ытла та мар, сахал та мар! Ку вара çурт тавра çӳрет. Акă вăл мал енĕпе иртрĕ, кĕтес хыçне пăрăнчĕ, унтан çуртăн тепĕр енне тухрĕ. Старшина тĕрĕслерĕ, пĕрре çаврăнма часовоя тăватă минут кирлĕ. Урам урлă каçма вĕсене пĕр минут та çитет. Апла пулсан, часовой кĕтес хыçне пăрăнсан, вĕсен урам урлă сиксе каçмалла та, çурт çумĕпе ик еннелле кайса фашиста ярса тытмалла.

Лыщеня хăйĕн шухăшне Афанасьева пĕлтерчĕ.

— Çул урлă каçсанах,—терĕ вăл,—эсĕ часовой хыççăн каятăн,—çав вăхăтра эпĕ ăна хирĕç тухатăп. Кĕтмен çĕртен мана курсан, вăл çухалса кайĕ. Шăп çав вăхăтра эсĕ ăна прикладпа пуçран туртса çапатăн. Ăнлантăн-и?

Шăп старшина кĕтнĕ вăхăтра часовой курăнчĕ. Хальхинче вăл чарăнса тăчĕ, çул çине пăхса илчĕ, кăштах пĕр вырăнта уткаласа илчĕ, унтан каллех кĕтес хыçне кайса çухалчĕ.

Икĕ мĕлке çул урлă тапса сикрĕç. Старшина хăвăрт кăна çурт çумĕпе иртрĕ те фашист умне сиксе тухрĕ. Нимĕç куçĕсене мăчлаттарма пуçларĕ, хăранипе пĕр вырăнтах утма тытăнчĕ. Тавçăрса илсе, автоматне ярса тытрĕ. Анчах ĕлкĕреймерĕ: Афанасьев ăна хыçалтан меллĕн çаврăнса çапрĕ—часовой çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ.

— Ну, кăна пĕтертĕмĕр пулас,—терĕ старшина.

## Нимĕç штабĕнче

Алăк çăмăллăнах уçăлчĕ. Разведчиксем шала кĕрсе тăчĕç. Лыщеня фонарьпе çутатрĕ. Пӳлĕмре никам та çук. Сĕтел çинче апат-çимĕç юлашкисем, пушă кĕленчесем. Сасартăк такам ӳсĕрни илтĕнчĕ — юнашар пӳлĕмрен. «Аха, такам пур»,—шутларĕ Захар. Алăка уçса ячĕ. Фонарь пӳлĕме çутатрĕ: сĕтел, икĕ кресло, кĕтесре—кровать.

— Тăр, çитрĕмĕр!—çывăракан фашист çинчен одеялне туртса илчĕ старшина. Лешĕ ним те ăнланмарĕ, хаяррăн та хыттăн кăшкăрса пăрахрĕ.

— Ан çухăраш!—старшина ăна автоматпа тĕллерĕ.

Нимĕç сасартăк лĕштĕрех пулчĕ, чĕтрене ерчĕ. «Русс, русс! Гитлер капут»,—мăкăртатрĕ хăй.

— Тумлан хăвăртрах!—Лыщеня ăна мундирне, аттисене ывăтса пачĕ.—Коля, ăнчĕ пирĕн ĕç. Офицер лекрĕ!

Фашист чĕтрекен аллисемпе аттине тăхăнчĕ, кительне аран-аран çаклатрĕ те кăшт лăпланчĕ.

— Ăçта штаб?—ыйтрĕ Лыщеня.

Фашист пуçĕпе сулларĕ:

— Руссиш никс ферштейн...

— Эх, шуйттан, штаб нимĕçле мĕнлеччĕ-ха? Ну, штаб! Пĕлетĕн-и?

— Никс,—хăйĕннех перет нимĕç.

Мĕн тумалла? Старшина карттă туртса кăларчĕ те унта кăвак виçкĕтеслĕхе пӳрнипе тĕксе кăтартрĕ.

— Найн, найн,—терĕ те кайма тăчĕ.

— Ăçта?—Афанасьев ун умне тухса тăчĕ.

Офицер сĕтел çине кăтартрĕ. Старшина тинех асăрхарĕ: сумка. Ăна илчĕ. Темле хутсем, карттă туртса кăларчĕ. Нимĕçе чĕнсе илчĕ.

— Ист,—нимĕç пĕр тăваткал тĕлне тĕксе кăтартрĕ.

Старшина иккĕленсе тăчĕ: фашиста пĕрле илсе каймалла е каймалла мар. Ăна сĕтĕрсе кайма çăмăл пулмĕ,— шутларĕ вăл. Хăварма та юрамасть. Персе пăрахас — пăшал сассине илтме пултараççĕ. Пĕрле илсе каймах тивет.

Лыщеняпа Афанасьев ялтан йĕркеллех тухрĕç, айлăма анчĕç те вăрман еннелле утрĕç. Малта — старшина. Ун хыçĕнчен нимĕç чупнă пекех пырать. Хыçалта — Коля Афанасьев.

Захар шикленни килсе тухрех: çул пăрăмĕнчен нимĕçсем курăнса кайрĕç. Вĕсем ушкăнпа пыраççĕ. Лыщеня айккинелле сикрĕ. Тыткăна илнĕ офицер, нимĕçсене курсан, туртăнкалама пуçларĕ.

— Расхутла,—кăшкăрчĕ старшина.

Афанасьев автоматран кĕске черет пачĕ те старшина хыççăн чăмрĕ. Вĕсен çулне пӳлсе, фашистсем чупрĕç. Перкелешӳ пуçланчĕ. Разведчиксем мĕнпур вăйран вăрманалла вĕçтерчĕç. Нимĕçсем хытăран хытă пеме тапратрĕç. Акă вăрман. Коля йăлтах халран кайрĕ. Захар та йывăррăн сывлать. Анчах старшина çамрăк разведчика çав-çавах васкатрĕ.

Захар малта пĕрмай Афанасьева васкатса пычĕ:

— Мĕн эсĕ ватă лаша пек сĕтĕрĕнетĕн?—хистерĕ вăл.

— Ывăннă!

— Эпĕ ывăнман-им? Çулталăк ытла эпĕ фронтсем тăрăх утатăп. Ялан ура çинче. Ăнлан, тăванăм, çутăличчен ĕлкĕреймесен — пĕтрĕмĕр.

Ăна Коля хăй те лайăх пĕлет. Захар хыççăн вăл юлашки вăй юлмиччен чупрĕ. Ӳкет, каллех тăрать те чупать, чупать, чупать...

Вăрман пĕтрĕ. Умра — анлă тӳремлĕх, ун тепĕр енче хамăрăннисем. Çутăлнăçемĕн çуталса пычĕ.

Старшина ахальтен шикленмен иккен. Вăрмантан тухсанах вĕсене асăрхарĕç. Тӳрех Захара урараи амантрĕç. Вĕриленнĕскер, вăл тата темиçе утăм шуса кайрĕ. Анчах часах вăйĕ пĕтсе çитрĕ.

— Коля,—терĕ вăл çирĕппĕн,—акă сана документсем тата карттă. Комбата пар.

— Эсир?

— Мĕн эпĕ? Курмастăн-им?

— Эпĕ пулăшатăп. Мĕнле те пулсан çитĕпĕр.

Коля юлташне сĕтĕрсе малалла шурĕ. Çав вăхăтрах автоматран та пере-пере пычĕ. Анчах фашистсем çывхарсах килеççĕ. Малалла кайма май çуккине пĕлсен, старшина йăваш сасăпа Афанасьева çапла хушрĕ:

— Хамăрăннисем патне çитме хушатăп, мана кунта хăвар. Эпĕ нимĕçсене тытса чаратăп. Юрать-ха, алăсем йĕркеллех. Сана халь никам та пулăшас çук. Асту: пирĕн соединени ăнăçлăхĕ санран чылай килет. Документсене илсе çитереймесен, пирĕннисене питĕ йывăр пулать. Юлташсене манран салам кала, усалпа ан асăнччăр. Тăвансене халлĕхе нимех те ан пĕлтерĕр: тен, хăтăлăп та. Ну, мĕн пуçна усрăн? Вĕçтер хăвăртрах. Халĕ кашни самант ылтăн пек.

Вут-çулăм вăйлансах пычĕ. Старшина юлнă тĕле халĕ миномётсенчен пеме пуçларĕç. Захар маскхалатне çурса, суранланнă урине туртса çыхрĕ, хăй тавра гранатăсем хучĕ те пеме хатĕрленсе тăчĕ.

Коля çав вăхăтра малтан-мала шурĕ. Хутран-ситрен минăсем çурăлаççĕ. Пуç çийĕн осколкăсем шăхăрса иртеççĕ, теприсем юнашарах ӳкеççĕ. Сасартăк миномётсем чарăнчĕç. Вăхăтлăха шăпах пулчĕ.

Анчах самантлăха çеç: часах автоматсем шатăртатма пикенчĕç.

— Аха,—шутласа илчĕ Афанасьев, — Захар та çапă-çăва кĕчĕ.

Гранатăсем çурăлма пуçларĕç. Унтан йăлтах шăпланчĕ.

Хăюллă разведчик çав кунхине юлашки хут çапăçни çинчен Афанасьев шухăшласшăн та пулмарĕ. Ун çăлăнса тухмаллах, малалла пурăнмаллах.

Юнашарах мина çурăлса каять. Коля хăй мĕнле майпа батальон командирĕн землянкине çитсе ÿкнине астумасть.

— Захар ăçта?—тÿрех ыйтрĕ комбат.

— Лере юлчĕ. Вăл йывăр аманнă, икĕ ураран та, утма пултараймасть. Нимĕçсем вара пире хупăрласах пычĕç. Вăл мана документсене кунта илсе çитерме хушрĕ, хăй вара фашистсене тытса чарма юлчĕ...

— Документсемпе паллашрăм. Усăллă сведенисем. Маттурсем. Анчах Захара шел, лайăх командир тата ăс-та разведчикчĕ.

— Тен, чĕрех пуль-ха,—иккĕленчĕ Афанасьев.

— Тем пекехчĕ те, анчах... Эсĕ вара телейлĕ пултăн. Ăнсăртран хамăр сăнавçăсем асăрхарĕç...

## Дзота илни

Афанасьев ертсе пыракан разведчиксен ушкăнне çутăлнă тĕле тăшманăн дзотне çавăрса илме тата ăна дивизи пĕтĕмĕшле наступление куçиччен тытса тăма хушрĕç.

Çак дзот Кондраково ял хĕрринче, икĕ тÿпем хушшинчи айлăмра вырнаçнă. Ун тăррине асăрхамалла мар витсе хунă. Дзот патне пыма айлăм тăрăх траншея чавнă.

Разведчиксем юр ăшне лăпчăнса выртрĕç. Шăп траншейăна хирĕç. Темиçе минут ĕнтĕ вĕсем пĕр-пĕччен часовоя сăнаççĕ.

Часовой патне пымалли пĕртен-пĕр çул — траншея. Афанасьев чавсипе Пастухова тĕксе илет те куçĕсемпе траншея çинелле кăтартать. Пастухов пĕр сас кăлармасăр каялла чакать те часах куçран çухалать.

Кĕтнĕ чухне вăхăт час иртмест. Часовой çав-çавах площадкăра. Акă Пастухов маскировка халачĕн капюшонне хыврĕ, траншейăна сикрĕ те шăпланчĕ.

Нимĕç хыçне сасартăк Пастухов çитсе тăрать...

Часовоя тирпейленĕ хыççăнах разведчиксем уçланкă урлă хăвăрт каçрĕç те траншейăна сиксе анчĕç.

— Юдин!—шăппăн хушрĕ Афанасьев.—Кĕнĕ çерте юлатăн, окопсене сăна!

Тасбулат Курманбаев алăка кăштах тĕкрĕ. Шалтан нӳрĕ те пăчă сывлăш тапса тухрĕ. Алăка хăвăрттăн яри уçрĕç те разведчиксем дзот ăшне кĕчĕç. Тасбулат урайĕнче выртакан çын çине пырса такăнчĕ, ӳкнĕ чухне тепĕр фашиста хăй айне турĕ. Тахăшĕ, хăранипе, хăрушшăн кăшкăрса ячĕ. Афанасьев пĕр аллине фонарь тытнăччĕ, тепринпе вара фашистсене автоматран çунтарчĕ.

Тепĕр икĕ минутран дзотра пирĕн разведчиксем хуçаланчĕç. Йĕри-тавра пăхкаларĕç. Варринче, пĕр пысăк чугун плита çинче, вĕр-çĕнĕ тупă ялтăраса ларать. Унăн кĕпçи дзот хупăлчине перĕнет. Ăна уçрĕç те — куç умне, ывăç тупанĕ çинчи пекех, Кондраково ялĕ патне пымалли вырăнсем тухса тăчĕç. Икĕ енчен те çул лайăххах курăнать.

Дзот питĕ çирĕпскер. Ăна дот теме те юрать. Стенасем ăшĕнчи шăтăксенче снаряд ещĕкĕсем. Сĕтел çинче телефон, темиçе фляжка. Çывăхрах хура ещĕк, ун патĕнчен икĕ хĕрлĕ провод тăсăлать. Проводсем дзот стени ăшне кĕрсе çухалаççĕ. Сĕтелтен сылтăм енче, стена тăрăх, пулемет лентисем тултарнă тимĕр коробкăсем. Кунтах пулемет, гранатăсем.

«Акă мĕнле крепоçе лекрĕмĕр»,—аслă сержант Коля Афанасьев сĕтел çине пăхса илчĕ. Фляжкăна курсан, типсе кайнă тутисене чĕлхепе йĕпетрĕ, пĕр фляжкине илсе шыв ĕçесшĕнччĕ, анчах çав вăхăтра тултан Николай Юдин, хăрушлăха систерсе, шăхăрни илтĕнчĕ. Разведчиксенчен пĕри автомат тытрĕ те дзотран васкаса тухрĕ.

Кондраково ялĕшĕн наступлени пуçламалли сигнал парас вăхăт та çывхарса пычĕ ĕнтĕ...

## Кондраковăшăн çапăçни

— Аслă сержант юлташ, унта темĕн хускалчĕç,—терĕ Василий Игнатов, нимĕçсен позицийĕсем еннелле кăтартса.—Артиллерирен вăйлă пеме тапратрĕç, пире лектермĕç-и?

Афанасьев дзотран тухрĕ. Тупăсем ахлатни хăлхасене хупласа лартрĕ. Апла пулсан, тахçантанпах кĕтнĕ вăхăт çитрĕ эппин. Анчах ăш вăркать: кам пуçларĕ? Пирĕннисем е гитлеровецсем?

— Леня,—чĕнчĕ вăл Пастухова,—пăх-ха, фрицсем мĕн хăтланаççĕ унта?

Пастухов çавăнтах дзот хыçĕнчи траншея тăрăх кайса çухалчĕ.

Дзотран Курманбаев сасси илтĕнчĕ. Афанасьева чĕнет.

— Мĕн пулчĕ?

— Телефон шăнкăртатрĕ, нимĕç темĕскер кăшкăрать, мĕн палкать — ăнланаймастăп,—тет Курманбаев.

Афанасьевпа Юдин телефон патне пырса тăчĕç.

— Итле-ха, Коля,—хушрĕ Афанасьев, хăй вара снаряд ещĕкĕ çине пырса ларчĕ.

— Вăрçать,—пĕлтерчĕ Юдин, трубкăри хăрăлтатакан сасса илтсе.

— Нимĕçле ыйт, мĕн кирлĕ?

Юдин ыйтрĕ, унтан кăшт итлесе тăчĕ. «Обер-ефрейтора чĕнет. Тата хатĕрленме е хатĕр пулма хушать, ахăртнех».

— Юрĕ,—салхуллăн сăмах хушрĕ Афанасьев,—Айтăр, юлташсем, дзота тирпейлер.

Гранатăсене йĕркепе хурса тухрĕç, пулемет лентисене салатрĕç, пулемета, автоматсене тĕрĕслерĕç.

Каллех телефон шăнкăртатрĕ.

Нимĕç чыхăнса каясла калаçнине итлесе, Юдин çапла ăнлантарчĕ:

— Каллех ефрейтора чĕнеççĕ, мĕн ответлес?

Афанасьев, кăшт шухăшласан, çапла ответлерĕ:

— Пĕлтер, часах килет.

Трубкăра темĕн шалтлатрĕ те шăпах пулчĕ, анчах часах каллех малтанхи сасă çапла ыйтрĕ: «Кам калаçать?»

Юдин вилнĕ гитлеровецăн кĕнекине пăхрĕ те хăюллăн ответлерĕ:

— Пĕрремĕш класлă рядовой Фридрих Зельц!

Трубка веçех шăпланчĕ.

Афанасьев ассăн сывласа илчĕ.

— Халĕ ĕненчĕç ĕнтĕ вĕсем: нимле ефрейтор та çук. Тула тухатпăр. Кунта халлĕхе ним те тумалла мар-ха. Тасбулат, дзота сывлăша сирпĕтме хатĕрленĕр. Нимĕçсем кунта килме хăтланĕç.

...Разведчиксем дзот тата ун патне пыракан траншея тавра выртрĕç. Пирĕн артиллери танлаттарнине итлерĕç, халĕ вăл сасă çывăхарах килет ĕнтĕ. Инçетре гитлеровецсен ушкăнĕ курăнса кайрĕ. Вĕсене пĕр пысăк офицер дзот патнелле ертсе килет. Çитме пĕр аллă метр юлсан, травана икĕ автомат тата пулемет сасси янратса кайрĕ. Вутçулăм нимĕçсене йăлтах шăлса тăкрĕ.

— Халĕ пытанма кирлĕ мар. Нимĕссем веçех сисрĕç ĕнтĕ. Часах ăшалантарĕç, кĕтсе кăна тăр. Вĕсем атакăна çĕкленеççех.

Хăй вырăнне Пастухова хăварса, Афанасьев дзота кĕчĕ, карттă сарса хучĕ те ун çине пĕр хушă тимлĕн пăхрĕ. Ăнланать вăл: çавнашкал çирĕп дзота çухатнипе тăшман ниепле те килĕшме пултараймасть. Хамăр подразделенисем килсе çитиччен тытăнса тăрайĕç-ши разведчиксем?

Дзот тулашĕнче каллех пулемет таклаттарма тытăнчĕ. Афанасьев, автомат илсе, тула сиксе тухрĕ.

Пулемет ахальтен пемен. Пĕр взвода яхăн нимĕссем траншея патнелле тапаçланаççĕ, хăйсем татти-сыпписĕр переççĕ. Пастуховпа Юдин, позицисене улăштарса, трофейлă пулеметран çунтараççĕ. Фашистсем, ӳкнисене пăхмасăрах, малалла чупаççĕ. Хăшĕ-пĕрисем траншейăна та сиксе анма ĕлкĕрчĕç. Гранатăсем ывăтнă хыççăн кăна гитлеровецсем пуçĕсене пĕкрĕç.

Ун хыççăн разведчиксем тата темиçе атака сирсе ячĕç. Темле тăрăшсан та фашистсем дзота каялла илеймерĕç. Тарăхнипе вĕсем тепĕр дзотран пеме пуçларĕç. Халиччен ăна никам та асăрхаман: пысăк чăрăш айне вырнаçнăскере тупма та йывăр. Ун патне çитме те икçĕр-виççĕр метр кăна. Çак дзот çинчен вара разведчиксемсĕр пуçне никам та пĕлмест-ха. «Çавна пула пирĕннисем наступление куçсан, пысăк çухату тӳсме пултараççĕ»,—шухăша путрĕ Афанасьев. Унтан вăл сехет çине пăхса илчĕ. «Икĕ дзотне те сывлăша сирпĕнтермелле те хамăр батальона хирĕç каймалла»,—çирĕппĕн йышăнчĕ Афанасьев.

## Вилĕмсĕрлĕх

Дзот! Ăна пĕр снаряд та тивмен, пĕр мина та тупайман. Халĕ вăл вилĕм сапать, разведчиксене çĕр çумне лăпчăнтарать. Пĕри кăшкăрса ячĕ, тепри çиллĕн вăрçса илчĕ, виççĕмĕшĕ йынăшмасăр чăтаймарĕ. Амбразура çăварĕнчен çулăм пĕр енчен тепĕр енне куçса пычĕ. Пульăсем шапăртатрĕç, юра сирпĕтрĕç, йывăç турачĕсене тата-тата пăрахрĕç.

Çапăçу ăнăçлă пултăр тесен, халĕ сехет мар, минут та сая яма юрамасть. Чи кирли — дзот çăварне пăкăласа хурасси. Малтан Тасбулат Курманбаевпа Николай Юдин (разведчиксем тытса илнĕ дзота тин çеç сывлăша сирпĕнтерчĕç-ха вĕсем) хăтланса пăхрĕç. Çук, май килмерĕ.

Дзот патне ҫитичченех вӗсене вилмеллех амантрӗҫ. Унтан Леонид Пастухов, Афанасьевӑн юратнӑ тусӗ, вилӗме хирӗҫ тухса шӑвӑнчӗ. Анчах ӑна та фашистсен пули пырса лекрӗ.

Ҫӗнӗ дзота вара кирек мӗнле пулсан та путлантарса лартмалла. Афанасьев туйрӗ: халӗ, акӑ, Василий Игнатов ҫӗкленет.

Аслӑ сержант Афанасьев дзот ҫине куҫ илмесӗр пӑхать. Сасартӑк разведчиксем пирӗн енчен хӑватлӑн пенине илтеҫҫӗ. «Апла пулсан, пирӗн полксемпе батальонсем наступление куҫрӗҫ. Дзота пӗтермелле!»

Игнатов халь-халь siксе ӳкес пекех хатӗр. Афанасьев та пиҫиххи ҫумӗнчен гранатине салтса хучӗ. Меллӗ вӑхӑтпа усӑ курса, вӗсем малтан-малаллах куҫса пычӗҫ.

Коля Афанасьевпа Василий Игнатов дзот патне тӳррӗн мар, айккинчен пыма шутларӗҫ. Юр тӑрӑх хырӑмпа шурӗҫ. Анчах фашистсем вӗсене кунта та асӑрхарӗҫ, пулеметран черет парса илчӗҫ. Коля пӗр хускалмасӑр выртрӗ. Халлӗхе пульӑсем ӑна тивмерӗҫ-ха, ҫиелтен шӑхӑра-шӑхӑра иртрӗҫ. Разведчиксем тата кӑштах малалла шурӗҫ. Мур илесшӗ, каллех тӑшмансем пеме тапратрӗҫ. Хальхинче Игнатова вилмеллех амантрӗҫ. «Сывӑ пул, паттӑр та хӑюллӑ разведчик, юратнӑ юлташӑм»,—Афанасьевӑн ирӗксӗрех чӗри тӑвӑлса килчӗ.

Афанасьев пӗчченех тӑрса юлчӗ. Те ҫав тери тарӑхнипе, Коля хӑвӑрттӑн ура ҫине сиксе тӑчӗ те малалла темиҫе утӑм чупса кайрӗ, амбразура ӑшне граната вирхӗнтерчӗ...

Граната кӗрӗслетсе ҫурӑлчӗ. Сывлӑш хумӗ каскӑна пырса тиврӗ, хулпуҫҫисене хӗстерчӗ.

Пулемет шӑпланчӗ. Анчах тепӗр минутран каллех кӗрлеттере пуҫларӗ. Дзот ҫӑварӗнчен каллех вут-ҫулӑм вӗлтлетме тытӑнчӗ. Малтан йӑвашшӑн, унтан хӑвӑртрах та вӑйлӑрах, тата хаяртарах.

Шӑп ҫавӑн чухне ӗнтӗ...

Коля Афанасьев, яланах сӑпайлӑ та йӑвашрах каччӑ, хӑй пурнӑҫне шеллемесӗр, тӑшман амбразурине пӗтерсе хума шутлать.

Акӑ, вӑл малалла шӑвать, йывӑррӑн сывлать. Чарӑнчӗ. Хӑвӑрт чӗркуҫленсе ларчӗ те юлашки гранатине амбразура ҫинелле вӑркӑнтарчӗ. Тӑшман пулемечӗ шӑпланчӗ. Анчах Коля хӑй те йывӑр аманчӗ. Вӑл сулӑнчӗ те хӑяккӑн тӳнсе кайрӗ.

Дзот амбразури патӗнчех...

* * *

Пирӗн салтаксем, хӑватлӑн «ура!» кӑшкӑрса, малалла ыткӑнчӗҫ, вилнӗ разведчиксем умӗпе чупса иртрӗҫ.

— Ку ман помощник вӗт!—кӑшкӑрса ячӗ Сафронов лейтенант. Коля вилнине вӑл ниепле те ӗненесшӗн пулмарӗ.—Коля! Коля-я!

Анчах суранланнӑ Афанасьев пӗртте хускалмасть. Пичӗ тӑрӑх юн юхса сарӑлнӑ...

Сахал мар курнӑ разведчиксем вилӗме. Йывӑр, питӗ йывӑр юлташа ҫухатма. Коля Афанасьев вилни пурне те хумхантарчӗ. Боецсем пӗр хушӑ чӗнмесӗр, пуҫӗсене пӗшкӗртсе тӑчӗҫ.

— Малалла!—команда пачӗ Сафронов лейтенант.

Пурте тӑшман ҫине ыткӑнчӗҫ. Инҫетри траншейӑран автомат шатӑртатни илтӗнчӗ. Совет воинӗсем тӑшман позицийӗсене ҫӗмӗрсе кӗчӗҫ. Гранатӑсем шартлатни, автоматсем шатӑртатни, гитлеровецсем ҫухӑрашни пӗтӗмпех пӗрле пӗрлешсе кайрӗ. Вӗренӳ батальонӗ фашистсене хаяррӑн тустарчӗ, Афанасьевпа унӑн паттӑр юлташӗсемшӗн тивӗҫлипе тавӑрчӗ.

Ҫапӑҫу шавӗ майӗпен лӑпланса пычӗ. Коля Афанасьева, Леня Пастухова, Вася Игнатова, Тасбулат Курманбаева тата Коля Юдина юлташӗсем плащ-палаткӑсемпе типтерлӗн чӗркесе ҫӗклерӗҫ. Майӗпен асӑрханса, пуҫӗсене усса утрӗҫ разведчиксем ҫӗрпӳрт патнелле. Вӗсен тар тӗтӗмӗпе тӗксӗмленнӗ пичӗсем ҫӗнтерӳшӗн яланхи пек савӑнӑҫлӑн кулмарӗҫ. Пысӑк ҫухату вӗсен чӗрине ыраттарчӗ.

Тепӗр кун Афанасьевпа унӑн юлташӗсене чӑрӑш патӗнче, шӑп хӑйсем Тӑван ҫӗршывшӑн ҫапӑҫса вилнӗ вырӑнта пытарчӗҫ. Вӗсене юлашки ҫула ӑсатма соединенири чапа тухнӑ мӗнпур воинсем, снайперсемпе пулеметчиксем, артиллеристсемпе саперсем, тӗрлӗ ҫарсен представителӗсем пухӑнчӗҫ. Хӑйсен юлташӗсемшӗн вӗсем тӑшмана хаяррӑн тавӑрма тупа турӗҫ.

Чӑрӑшпа юнашар палӑк лартрӗҫ. Ун тӑрринче — хӗрлӗ ҫӑлтӑр. Цинк пластинка ҫине аслӑ сержант Николай Афанасьев паттӑрлӑхне ҫырса хучӗҫ, Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орден ӳкерчӗҫ (унпа Афанасьева вилнӗ хыҫҫӑн наградӑланӑ). Пластинкӑна рамка ӑшне вырнаҫтарчӗҫ.

* * *

Килте вара Кольӑран ҫыру килессе чӑтаймасӑр кӗтрӗҫ. Ҫӗрле ура сассине илтсе, Мария Андреевна темиҫе

хутчен те вӑрана-вӑрана кайрӗ. Ҫашнинчех хӗрача-почтальона тимлӗн кӗте-кӗте илчӗ.

— Тен, паян, тен, ыран,—лӑплантарчӗ вӑл хӑйне хӑй.

Акӑ ҫыру килчӗ... Анчах ялахри пек виҫкӗтесли мар, пысӑк та йывӑрскер. Ҫонверт ҫинчи адресне те Ҫоля ҫырман. Чӑваш АССРӗ, Тӑвай районӗ, Тӗмер ялӗ, Афанасьевсене.

Мария Андреевна ӑна чылайччен уҫма хӑраса тӑчӗ. Юлашкинчен:

— Рая, вула-ха. Чӗре сисет — ахаль ҫыру мар пулӗ,— терӗ хӗрачине.

Рая хута чӗтрекен аллисемпе тытрӗ те вулама пуҫларӗ:

«...1943 ҫулхи январӗн 28-мӗшӗнче каҫхине сирӗн ывӑлӑр Николай Афанасьев хӑйӗн ӳчӗпе тӑшман дзочӗн амбразурине хупласа паттӑр вилӗмӗпе вилчӗ.

Ҫоля Афанасьева боецсем ырӑ кӑмӑлӗшӗн, командирсем вара хӑюлӑхпа хастарлӑхшӑн юрататчӗҫ. Хамӑр паттӑр юлташӑн ӳчӗ умӗнче эпир нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ Тӑван ҫӗршыва ирӗке кӑларассишӗн юлашки юн тумламӗ юлмиччен кӗрешме тупа турӑмӑр. Ҫоля Афанасьевшӑн эпир тавӑратпӑрах. Макӑрма кирлӗ мар, мӗншӗн тесен кашни герой вилнишӗн йӗме куҫҫуль те ҫитеймӗ. Ҫавӑнпа та тылра тата хытӑрах ӗҫлемелле, фронтра винтовкӑна тата ҫирӗпрех тытмалла. Ҫакӑ вара фрицсене хӑвӑртрах хӑваласа яма пулӑшӗ.

Взвод командирӗ лейтенант *Сафронов Михаил*».

Пысӑк хуйхӑ килсе ҫапрӗ Илларионовсен ҫемйине. Малтанлӑха ӗненес те килмерӗ, тӗлӗкре пек кӑна туйӑнатчӗ. «Тен, йӑнӑшнӑ, тен, юратнӑ ывӑлӑм каялла чиппиперех килсе ҫитӗ-ха»,—темиҫе хутчен те шухӑшларӗ Мария Андреевна. Анчах таврӑнмарӗ ывӑлӗ. Часах командовани те ҫырса пӗлтерчӗ. «Ҫук, урӑх кураймастӑп иккен ывӑлӑма, илтейместӗп ӗнтӗ унӑн хаваслӑ юррисене, ачисене те чӗркуҫҫи ҫинче сиктереймӗп»,—чылайччен кулянчӗ, хурланчӗ, татӑлса макӑрчӗ салтак амӑшӗ.

* * *

Ҫулсем иртрӗҫ. Ҫоля Афанасьевпа унӑн юлташӗсен ӳтне Селищево ялне куҫарчӗҫ (Ҫондраково ялне вара нимӗҫсем веҫех ҫунтарса янӑ). Халӗ кунта ҫул хӗрринче палӑк ларать. Хулпуҫҫи урлӑ автомат ҫакнӑ салтак вилтӑпри ҫине чечек кӑшӑлӗ хурать. Пуҫне уснӑ салтак. Вӑл

хăйĕн юлташĕсемпе сывпуллашать. Çĕнтерӳ залпне илтеймерĕç вĕсем, анчах хăйсен юнĕпе вĕсем паянхи кĕтнĕ сехете, ирĕклĕхе çывхартрĕç.

Палăк патĕнче хĕлле те, çулла та чечексем. Кунта митингсем иртеççĕ, пионерсене пĕрремĕш хут хĕрлĕ галстук çыхса яраççĕ. Кунта фронтра пуçне хунă салтаксен ачисем, амăшĕсем, ашшĕсем тата вăрçă ветеранĕсем килсе çӳреççĕ, паттăрсене чысласа асăнаççĕ, вилтăпри çине чечексем лартаççĕ.

## Йĕрлевçĕсем ĕмĕтленеççĕ

178-мĕш стрелковăй дивизи командирĕ пулнă Кудрявцев генерал-майор мана Мускав облаçĕнчи Электросталь хулине кайса курма сĕнчĕ.

— Унта тĕлĕнмелле ачасемпе тĕл пулăр эсир. Вĕсем сире пирĕн дивизи çинчен питĕ нумай каласа парĕç,— терĕ отставкăри генерал.

Часах унта çул тытрăм.

Вокзалтан инçех те мар 12-мĕш вăтам шкул. Акă генерал каланă тĕлĕнмелле çиччĕмĕш класс. Унта 22 арçын ача, 22 хĕрача.

«Известия» хаçатра 178-мĕш дивизи ветеранĕ В. А. Кондратьев (вăл Коля Афанасьевпа темиçе хут та тĕл пулнă) фронтра ӳкернĕ фотоӳкерчĕксем пичетленсе тухсан, ачасем çапла шутларĕç: Хĕрлĕ Ялавлă Кулагински стрелковăй дивизире пулнă кашни-кашни боец çинчен (чĕрĕ е вилнĕ вăл — пурпĕрех) сведенисем пуçтарас, ӳссен тен, кĕнеке те çырăпăр....

Виктор Алексеевич Кондратьев нумай кĕттермерĕ. Ачасене вăл хăй пĕлекен салтаксен адресĕсене, çавăн пекех çырусем, фотокарточкăсем чылай ярса пачĕ. Çапла çуралнă та ĕнтĕ класра дивизин çар мухтавĕн музейĕ.

Шкулти çамрăк йĕрлевçĕсем халĕ дивизире пулнă 250 çынна шыраса тупнă тата вĕсемпе çыхăну тытаççĕ. Шкула çĕршывăн çĕршер хулисемпе ялĕсенчен çырусем килеççĕ.

...Дивизи командирĕ пулнă (1943 çулхи иккĕмĕш çур çулĕнчен пуçласа) отставкăри А. Л. Кроник генерал-майор музее кĕнĕ çĕре карса хунă хĕрлĕ лентăна касать. Музей уçăлчĕ! Унăн малтанхи хăнисем — офицерсемпе салтаксем — тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕç: стендсем çинче пине яхăн экспонат!

Витринăсенчен пĕринпе паллашар-ха. Акă, 693-мĕш

полкри Валентин Алексеев саперăн хĕрлĕ армеец кĕнеки, ăна пуля шăтарнă. Вăрçăччен Валентин Томскри индустри техникумĕнче вĕреннĕ, Гагарин урамĕнчи 31 çуртра халĕ те унăн ватă амăшĕпе ашшĕ пурăнаççĕ.

Валентин хăюллă, Тăван çĕршыва чун-чĕререн парăннă салтак пулнă. Çарти паттăрлăхшăн ăна орденпа наградăланă. 1942 çулхи январĕн 13-мĕшĕнче пĕр пĕчĕк Глестково ялне хăтарнă чухне ăна тăшман пули вилмеллех пырса тивет.

Унăн пиччĕшĕ А. П. Алексеев, пĕр полкрах пулнăскер, халĕ запасри полковник. Вăл та шкула килнĕ. Пиччĕшĕн хĕрлĕ армеец кĕнекине вăл чылайччен алăра тытса тăрать...

Тепĕр стенд çине, «Вĕсем Кондраково ялĕшĕн çапăçса вилнĕ» тесе çырнă. Чи курăнмалли вырăнта пирĕн янташ Н. А. Афанасьев аслă сержант портречĕ. Ун айне çапла çырса хунă:

«Аслă сержант Коля Афанасьев, Чăваш республикинче çуралнăскер, 1943 çулхи январĕн 28-мĕшĕнче каçхине Калинин облаçĕнчи Ржев (унччен Молододут) районĕнчи Кондраково ялĕ патĕнче паттăррăн вилнĕ — тăшман дзочĕн амбразурине хăйĕн ӳчĕпе хупланă. Çарти паттăрлăхшăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденпа тата «Хăюлăхшăн» медальпе наградăланă».

Кунтах Коля Афанасьев уйрăм вĕренӳ батальонĕнчи парторганизацине çырнă заявлени те пур. Чылай вăхăт иртнипе хучĕ саралса кайнă — ăна вăл юлашки разведкăна каяс умĕн çырнă пулас:

«Аслă Ленин тунă тата вăл ертсе пынипе çитĕнсе çирĕпленнĕ Коммунистсен партийĕ пирĕн халăха ирĕклĕх, телей тата культура пачĕ. Эпĕ юратнă тăван çĕршывшăн фашистсене хирĕç кĕрешетĕп. Çак кĕрешӳре, тен, вилĕп те, анчах Тăван çĕршывшăн никам çĕнтерейми парти членĕ, коммунист пулса вилес килет».

Кăшт сылтăмарах — Кольăпа пĕрле разведкăна кайнă воинсен сăнӳкерчĕкĕсем. Акă вĕсем:

*Игнатов Василий Тихонович хĕрлĕ армеец,*
*Пастухов Леонид Романович хĕрлĕ армеец,*
*Курманбаев Тасбулат хĕрлĕ армеец,*
*Юдин Николай Филиппович хĕрлĕ армеец.*

Сăнӳкерчĕксен айĕнче вĕренекенсенчен пĕри Иосиф Уткин поэтăн 1942 çулхи июлĕн 2-мĕшĕнче дивизи хаçатĕнче («Малалла» ятлă пулнă вăл) пичетленнĕ сăввине типтерлĕн çырса хунă.

«Подвиг, мужественно пройденный,
Не забудется потомками.
Будет петь веками Родина
Нашей славы песни громкие.»

Çамрăк экскурсоводсем — Люда Жирнова тата Игорь Безенкин — пире тĕп стенд патне чĕнеççĕ. Кунта полкри салтаксен паттăрлăхĕ çинчен калакан япаласем: снаряд ванчăкĕсем, пульăпа шăтарнă икĕ нимĕç каски, штык, авиабомба стабилизаторĕ. Дегтярев системин пистолет-пулемечĕ (вĕсене Кулагино сăрчĕ çинче тупнă).

Александр Иванович Селезнев пулеметчик, шкул ачисем чĕннипе Çĕпĕртен килнĕскер, экспоната тимлесех пăхать. Кам пĕлет, тен, шăп çак пулеметран пенĕ Александр Иьанович!

Экспонатсем чылай. Пуринпе те паллашас тесен, пĕр кун та çитмĕ. Кунтах салтаксен «Малалла» хаçачĕн тăватă çул хушшинче тухнă номерĕсем, дивизири медсанбат врачĕн Анна Тимофеевна Фроловăн гимнастерки, салтаксемпе офицерсен В. А. Кондратьев ӳкернĕ ӳкерчĕкĕсем...

Фронтран янă çырусем нумай. Вĕсенчен кашниех совет çынни кирек мĕнле йывăрлăхран та хăраса тăманнине уççăн кăтартса парать. Вĕсене хумханмасăр вулама çук. Ирĕксĕрех вара пирĕн телейлĕ пурнăçшăн кĕрешнĕ вилĕмсĕр паттăрсене тепĕр хут аса илетĕн.

Уйрăм стенд çинче — Кулагино патĕнчен, политпай начальникĕн А. А. Жалис подполковникăн тата унăн заместителĕн В. С. Сидоров майорăн вилтăприйĕ çинчен илсе килнĕ тăпра. Вĕсем Псков облаçĕнчи Новосокольники хулишĕн çапăçса вилнĕ...

Музей уçăлмалли кун тĕлне йĕрлевçĕсем класри мĕнпур 44 ача сассине лента çине çырса илнĕ. Вĕсем вăрçă ветеранĕсене чĕнсе калаçаççĕ.

Акă çав лентăри калаçу сыпăкĕ:

Учительница сасси:

— Вĕсем, паллах, хумханаççĕ. Кашниех сире хăй мĕн шутлани çинчен каласшăн. Итлесе пăхар-ха эппин...

Котова Галя:

— 178-мĕш стрелковăй дивизи ветеранĕсем! Халĕ эпир сирĕн паттăрлăх çинчен лайăх пĕлетпĕр. Воинсенчен чылайăшĕ вăрçă хирĕнчен таврăнаймарĕç. Пирĕн телейлĕ пурнăçшăн полк комиссарĕ Бударин, батальон командирĕ Урванцев, дивизири хастар разведчиксем Афанасьев, Пастухов, Юдин тата ытти чылай паттăрсем пуçĕсене

хучӗҫ. Вӗсен паттăр ӗҫӗсене эпир нихăҫан та манмастпăр...

Васильева Наташа:

— Сире, хăюллă салтаксем, шыраса тупнишӗн эпӗ ҫав тери савăнатăп...

Тарасов Сережа:

— Манăн Совет Союзӗн Геройӗ Салават Каримов тата Коля Афанасьев пек пулас килет...

«Ҫак дивизин ҫар мухтавӗн музейне уҫас шухăша кам малтан панă-ши?»—тесе ыйтрăмăр эпир. Ачасем вăхăтлăха шăпланчӗҫ. Унтан вара, кайри партăран, пӗр алă ҫӗкленчӗ:

— Аса илтӗм...

Музей пирки чи малтан шкул директорӗ Ефим Давыдович Шульман каланă иккен. Кайран эпир унпа паллашрăмăр, чылайччен калаҫрăмăр. Вăл ачасене питӗ юратать, сăпайлă. Макаренко колонийӗн воспитанникӗпе туслă ҫыхăну тытать. Шкулти учительсем туслă пурăнаҫҫӗ, пӗр-пӗрне пулăшаҫҫӗ, яланах ăшă кăмăллă.

Ҫамрăк йӗрлевҫӗсем Тăван ҫӗршывшăн усăллă, партипе правительствăна паракнă ҫынсем пулса ҫитӗнме тăрăшаҫҫӗ.

Класс руководителӗ В. В. Соловьев тата вӗренӳ пайӗн заведующийӗ В. И. Шахова каласа панă тăрăх, фронтовиксен ҫырăвӗсем, асаилӗвӗсем ачасене ҫав тери хумхантарнă иккен. Дивизири вилнӗ тата чӗрӗ салтаксен паттăрлăхне ӗмӗр асăнмалăх палăртса хăварма шутланă класăн начар вӗренме юрать-и-ха вара!

Ахальтен мар ӗнтӗ кунта халӗ кашни «иккӗшӗн» пӗтӗм класс кулянать. Лайăх вӗренекенсем ӗлкӗрсе пырайманнисене пулăшаҫҫӗ. Класри кашни ача ветерансене ҫапла ответлеме тивӗҫлӗ пултăр: «Пирӗн «иккӗсем» ҫук!»

Сăмах май каласан, пире ҫакă та тӗлӗнтерчӗ: дивизи ветеранӗсем патне ҫырнă ҫыру вырăс чӗлхипе ҫырнă сочиненипе е упражненипе танлашать. Ҫыру тарăн шухăшлă, ăна тӗрӗс те илемлӗ ҫырнă пулсан, уншăн пионера журналта лайăх паллă лартса параҫҫӗ.

Шкул ачисем патӗнче эпӗ Ҫӗнтерӳ кунӗ умӗн пултăм. Майăн 9-мӗшӗнче вӗсем патне дивизи ветеранӗсем хăнана килмеллеччӗ. Пионерсем ман умрах вăрҫă участникӗсене тупа тумалли текста ҫырса хатӗрлерӗҫ. Унта ҫакăн пек сăмахсем пур:

«Электросталь» хулинчи 12-мӗш шкулта вӗренекенсем сирӗн умра, 178-мӗш Хӗрлӗ Ялавлă Кулагински стрелковăй

дивизи ветеранĕсем, çапла тупа тăваççĕ: эпир, Зоя Космодемьянская ячĕпе хисепленекен отрядри хĕрлĕ йĕрлевçĕсем, сире пĕтĕм чĕререн тав тăватпăр, пирĕн лăпкă вĕренӳшĕн, канушăн, телейшĕн эсир хăвăр пурнăçăра шеллемесĕр кĕрешрĕр...

Пуç таятпăр сире, Ленинла гварди çыннисем, пирĕн Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварнă паттăрсем!..

Сирĕн пек пулас тесе, эпир Тăван çĕршыв хăватне ӳстерсе тата тĕреклетсе пырăпăр, çутă малашлăхшăн кĕрешекенсем пулăпăр...

Ленин çулĕнчен эпир нихçан та пăрăнмăпăр! Хамăр пурнăçра çĕр çинче коммунизм тăвассишĕн чĕре тапма чарăниччен кĕрешме тупа тăватпăр...»

Тепĕр виçĕ кунтан шкула дивизи ветеранĕсем пухăнчĕç. Офицерсемпе салтаксенчен чылайăшĕ пирĕн янташа Коля Афанасьева лайăх пĕлеççĕ иккен.

## Шавлăрах, хурамасем!

Электросталь хули варринче, Ленин проспектĕнче Культура дворецĕ (вăл «Октябрь» ятлă) вырнаçнă. Майăн 9-мĕшĕнче унăн тĕп залĕ 12-мĕш вăтам шкулта вĕренекенсемпе тата хулари ĕççыннисемпе тулчĕ.

Фанфарăсем «Итлĕр пурте!»—кĕрлеççĕ.

Çамрăк йĕрлевçĕсем пĕлтереççĕ:

— Паян эпир Хĕрлĕ Ялавлă 178-мĕш Кулагински стрелковăй дивизи ветеранĕсемпе тĕл пулма пухăнтăмăр. Хаяр вăрçă çулĕсенче вĕсем пирĕн Тăван çĕршыва ирсĕр фашистсенчен тасатассишĕн пурнăçне шеллеми кĕрешрĕç.

Хăнасене зала чĕнеççĕ. Оркестр марш калать. Зала дивизи салтакĕсем кĕреççĕ. Кăкăрĕсем çинче орденсемпе медальсем, чылайĕшĕн çӳçĕсем кăвакарнă. Нумаййăн вĕсем, хăнасем. Инçет Хĕвелтухăçĕнчен, Çĕпĕртен, Ленинградран, Поляр çывăхĕнчен, Чăвашран — ăçтан кăна килмен пулĕ вăрçă ветеранĕсем Мускава.

Вĕсене шкулти çамрăк йĕрлевçĕсем ертсе пыраççĕ.

Диктор сасси илтĕнсе каять:

— Дивизи командованийĕ пырать!

Малта — дивизи командирĕ, запасри генерал-майор, истори наукисен кандидачĕ Александр Львович Кроник. Генерал мундирне орденсемпе медальсен йĕркисем илемлетеççĕ. Улшăннă-ши командир? Паллах. Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ ĕнтĕ. Анчах унăн сăнарне Александр Фадеев

писатель çырса хăварнине астăвакансем вара пачах улшăнман тейĕç: ун чухнехи пекех хура та çăра куç харшисем, малалла тинкерсе пăхакан куçсем...

Унпа юнашар — дивизи командирĕн тыл енĕпе ĕçлекен заместителĕ, отставкăри полковник А. С. Тельнов (халĕ вăл Мускав облаçĕнчи Реутово станцинче пурăнать), дивизи прокурорĕ пулнă, отставкăри юстици подполковникĕ, халĕ Белоруссири Министрсен Совечĕн пай начальникĕн заместителĕ Ю. И. Домбровский (вăл çак соединенин Белоруссири ветерансен совечĕн председателĕ). Кунтах дивизин пĕрремĕш командирĕн А. Г. Кудрявцев генерал-майорăн (ăна салтаксемпе офицерсем питĕ юратнă) адъютанчĕ В. Ф. Стадник. Вăл Коля Афанасьева лайăх пĕлнĕ...

Зал хыттăн алă çупать.

— 386-мĕш стрелковăй полк пырать!

— 709-мĕш стрелковăй полк пырать!

— 693-мĕш стрелковăй полк пырать!

— Уйрăм вĕренӳ батальонĕ пырать!

Мĕнле калас — полк е батальон? Кашнинчех — пĕр çирĕм çын...

Зала медсанбат пырса кĕрет. Ăна медицина службин майорĕ, дивизин главнăй хирургĕ С. И. Демидов (халĕ Барнаултa пурăнать) ертсе пырать. Унпа юнашар —аслă сестра И. С. Резникова, медсанбат хирургĕ, медицина службин капитанĕ, халĕ БССР тава тивĕçлĕ врачĕ А. Н. Похвалинская, çар врачĕ Н. И. Лекомцев.

Ветерансене саламланă май, йĕрлевçĕсем дивизи Ялавĕ çинчен тĕплĕн каласа кăтартаççĕ. Çак ялав ĕнтĕ салтаксене хавхалантарнă. Çак ялав ĕнтĕ Коля Афанасьевпа унăн юлташĕсене çĕнтерӳ çулĕпе илсе пынă. Çак Хĕрлĕ Ялава салтаксемпе офицерсем куç шăрçине сыхланă пек сыхланă. Çапла, çав ялавпа пирĕн воинсем Кулагино сăрчĕсене тытса илчĕç. (Кулагино ялне вара нимĕçсем пĕтĕмпех çунтарса янă. Çав ял çыннисем халĕ Смоленск облаçĕнчи Духовщина районĕнчи Троицкое ялĕнче пурăнаççĕ. Унти сакăр çул вĕренмелли шкул Кулагино ячĕпе хисепленсе тăрать). Çак ялавпа ĕнтĕ Новосокольники хулине ирĕке кăларнă, Маннергейм тăрăхне çĕнтернĕ, Выборга штурмланă.

Акă, дивизи ялавне зала йăтса кĕреççĕ. Ăна кунта СССР Хĕçпăшаллă Вăйĕсен Центральнăй музейĕнчен илсе килнĕ. Ялавçă ăна сцена çине çĕклесе хăпарать. Ватă генерал, пĕшкĕнсе, хĕрлĕ хăмача чуптăвать.

Вăрçă паттăрĕсене чысласси малалла пырать.

Йĕрлевçĕсем Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн пынă хаяр çапăçу эпизочĕсене аса илтереççĕ.

...Çĕпĕртен, Инçет Хĕвелтухăçĕнчен салтаксен çĕнĕ эшелонĕсем Мускав патне пĕр вĕçĕмсĕр пынă. Вĕсем хушшинче Омскра йĕркеленĕ 178-мĕш стрелковăй дивизи те пулнă. Ăна Александр Георгиевич Кудрявцев ертсе пынă (Украинăра Иваново-Франковск облаçĕнчи Коломия хулинче пурăнать). Мускав çывăхĕнче, Хĕвеланăç фронтĕнче июлĕн 13-мĕшĕнче пĕрремĕш хут çапăçăва кĕрет. Çак тытăçура полк комиссарĕ Будорин паттăрла вилет. Кайран ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

...Тăван çĕршыв тĕп хули хăрушлăхра. Нимĕçсем Мускава илесшĕн. Хула тулашĕнче тупăсен сасси илтĕнет. Фашистсен мотоциклисчĕсем Химки вокзалĕ патнех çитнĕ. Шăп çав вăхăтра самантра Алексей Сурков поэт «Мускава хӳтĕлекенсен юрри» çырнă. Халĕ, акă, ăна пĕтĕм зал юрласа ячĕ:

Не смять богатырскую силу —
Могуч наш заслон огневой,
Захватчик найдет лишь могилу
В туманных полях под Москвой...

Шкул ачисем те, вăрçăра пулнисем те юрлаççĕ.

Володя Ежов:

— «Пĕр утăм та каялла чакмалла мар!» Çакăн пек приказ илнĕ пирĕн малти дивизисем. Нимĕçсем хăватлăн пырса çапнă. Анчах тăшман Мускава кĕреймен. Тĕп хулашăн çапăçнă чухне 178-мĕш стрелковăй дивизи воинĕсем те паттăрлăх кăтартнă.

Музейăн çамрăк историкĕсем çакна аса илтереççĕ: 1941 çулхи октябрь уйăхĕнче 20 кун хушшинче дивизи тăшманăн виçĕ соединенине çĕмĕрсе тăкнă. Çав кĕрешӳсенче Салават Каримов тутар (ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă), стрелковăй батальон командирĕ Николай Урванцев, батальон командирĕн заместителĕ Анатолий Масленников тата ыттисем те хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă...

Дивизи ветеранĕсене сăмах параççĕ. Ю. И. Домбровский (Минск) калаçать. Çамрăк йĕрлевçĕсене вăл чĕререн тав тăвать. В. А. Кондратьев (Томск) музее хăйĕн фотоӳкерчĕкĕсене тата Попов художникăн «Новосокольникине штурмлани» картинине парнелет.

Çав вăхăтра зала хăнасен çĕнĕ ушкăнĕ килсе çитет: Ленинградри Можайский ячĕпе хисепленекен академин кафедра заведующийĕ Сергей Богданович Арустамов полковник, политпай писарĕ пулнăскер, Коля Афанасьевăн çывăх тусĕ Иван Павлович Фомовский (Киев), запасри рядовой, Çĕпĕрти физикăпа техника институчĕн техникĕ Олег Евгеньевич Гуковский, Ленинградри Можайский ячĕпе хисепленекен академи преподавателĕ Сергей Алексеевич Денисов полковник — дивизири разведка начальникĕ пулнăскер. Хăнасене пурте тăвăллăн алă çупса саламлаççĕ.

Кам-кам килейменнисене пĕлтереççĕ. Нумайăн вĕсем. Çар мухтавĕн музейĕ ячĕпе 109 çыру тата 54 телеграмма килнĕ. Вĕсен шутĕнче: отставкăри генерал-лейтенант М. Ф. Лукин — Çĕпĕр çар округĕн Çар Совечĕн членĕ пулнă, дивизие йĕркелес ĕçе хутшăннă, кайран 16-мĕш çара ертсе пынă; Калининри Суворов училищин начальникĕ, чапа тухнă 709-мĕш стрелковăй полк командирĕ пулнă Б. А. Костров генерал-майор; дивизи офицерĕ пулнă, халĕ СССР Çутĕç министрĕн заместителĕ Ф. Г. Папачин; дивизи ветеранĕ, Томскри университет профессорĕ Р. Н. Щербаков тата ыттисем те.

Çавăн пекех Коля Афанасьев ашшĕ Афанасий Илларионович Илларионов янă çырăва та вуласа пачĕç.

«Манăн хаклă ывăлăмсем! — тесе çырать дивизи ветеранĕсене. — Тавтапуç сире манăн Кольăна çавăн пек хăюллă та хастар пулма вĕрентнĕшĕн, çар ăсталăхне хăнăхтарнăшăн. Вăл, Матросов пек, пирĕн Тăван çĕршывшăн, партишĕн, халăхшăн паттăрлăх кăтартнă. Электросталь хулинчи çамрăк тусăмсене çапла калас килет: Александр Матросов, Зоя Космодемьянская, Николай Гастелло пек, пирĕн хаклă ывăлăмăр Коля Афанасьев пек пулăр! Сире халĕ пурте çителĕклĕ! Пирĕн юратнă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр Владимир Ильич Ленин халалласа хăварнă пек вĕренĕр. Ан манăр, сирĕн Çĕр çинче коммунизм тумалла».

Зал шăпах. Шăна вĕçни те илтĕнет. Пурте çак çыру пирки шухăша кайрĕç пулмалла.

Сасартăк пĕр пĕчĕк хĕрача, Марина Липовская, «Расскажите о моем отце!» юрра юрласа ярать. Тимлĕн, сывламасăр итлеççĕ ăна пухăннисем.

— Ирĕклĕхшĕн кĕрешсе вилнĕ салтаксен юнĕпе нӳрленнĕ пирĕн çĕр. Совет салтакĕн паттăрлăхĕ умĕнче ирĕк-

лĕ этемлĕх пуç таять. Вăрçă хирĕнчен таврăнайман аттесемпе аннесене, пиччесемпе аппасене, тусăмăрсемпе юлташăмăрсене асăнса пуçа таятпăр эпир те!

Шăплăх минучĕ...

Тепĕр кун эпир, вăрçă ветеранĕсем, Мускава кайрăмăр... Инçетренех курăнаççĕ Кремль çăлтăрĕсем. Вĕсем ĕнтĕ çĕнтерӳ çулне çутатса тăчĕç. Кунта, Мускав варринче, Паллă мар салтак вилтăприйĕ çинче ĕмĕр сӳнми вут çунать. Унта яланах чечексем. Хĕрлĕ тюльпансемпе, шурă гвоздикăсемпе пĕрле тин çеç татса килнĕ урăх чечексем... Вĕсем ĕнтĕ салтак ятне тата паттăрлăхне чыслаççĕ.

Вилтăпри умне 178-мĕш стрелковăй дивизи ветеранĕсем тăрса тухрĕç. Ялавсем усăнчĕç...

Электросталь хулин тĕп урамĕпе çынсен колонни утать. Кашнин аллинче — хурама йывăççи. Малта А. Л. Кроник генерал тата 12-мĕш вăтам шкул директорĕ, запасри капитан Е. Д. Шульман. Вĕсемпе юнашар — Ульяновск облаçĕнчи малта пыракан колхоз председателĕ Михаил Иванович Кибакин; дивизири пĕр ротăри повар, халĕ Байкал леш енчи чабан Андрей Яковлевич Горюнов; саперсен уйрăм батальонĕн командирĕ, халĕ СССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи ĕçпе ĕç укçи Комитетĕнче ĕçлекен Юрий Ефимович Пик; дивизи командирĕн адъютанчĕ Валентин Филиппович Стадник (пĕр вăхăтра вăл вĕренӳ батальонĕн парторгĕ пулнă)...

Первомайски урамĕ хăнасен парнисене йышăнма хатĕрленнĕ ĕнтĕ. Шăп çакăнта, дивизи воинĕсене чыслаcа, йывăçсем лартмалла. Чи малтан А. Л. Кроник генерал лартать. Унтан инçех мар А. П. Алексеев полковник икĕ хурама лартрĕ — хăйшĕн тата Валентин пиччĕшĕшĕн. Вăрçăра вилнĕ Александр Борзова асăнса, Полина Васильевна Акимовна (Барнаул) йывăç лартрĕ. Николай Урванцев (пĕтĕм дивизи юратнă ăна) ячĕпе тăрукак икĕ хурама хунавĕсене П. Н. Лекомцев тата П. И. Андрианов лартрĕç. М. Ш. Гадельшин йывăç çумне табличка çыхса хучĕ, унти сăмахсем çынсене 386-мĕш стрелковăй полк командирне Петр Иванович Дронова яланах асра тытма чĕнеççĕ. Шкул ачисем Галя Котова тата Оля Зотова лартнă хурама вара пирĕн янташа Коля Афанасьева асăнса кашлама пуçлĕ.

Урамăн сылтăм енче хурамасен аллейи пулса тăчĕ. Пурĕ çĕр тĕп йывăç. Вĕсене пĕтĕм хула пăхса çитĕнтерет.

Шавлăр эппин, хурамасем! Совет салтакĕн паттăрлăхне мухтаса, унăн вилĕмсĕр ятне чыслаcа юрă юрлăр!

# Евгений Михайлов — Совет салтакӗ



Ашшӗ ячӗпе Женя Михайлова темиҫе хутчен ҫеҫ асӑннӑ: шкултан сакӑр ҫул вӗренсе тухни ҫинчен панӑ свидетельствӑра тата Омск хулинчи Куйбышевски районти ҫар комиссариатне тӑратнӑ тӑватӑ-пилӗк справкӑра кӑна. Евгений Михайлов кӗҫӗн сержант 1969 ҫулхи мартӑн 2-мӗшӗнче Совет Союзӗн государство чиккине сыхланӑ чухне паттӑрсен вилӗмӗпе вилнӗ. Ҫирӗм ҫулта пулнӑ салтак. Ҫак илемлӗ пурнӑҫӑн тути-масине те лайӑххӑн пӗлме ӗлкӗреймен.

Амӑшӗн, Нина Степановнӑн, ашшӗн, Константин Ивановичӑн, хуйхи виҫесӗр. Мирлӗ вӑхӑтра аслӑ ывӑлне ҫухатнӑ вӗсем. Дамански геройӗсен вилӗмӗшӗн ашшӗ-амӑшӗсемпе пӗрле пирӗн пӗтӗм ҫӗршыв хурланать.

...Евгений пилӗк ҫула ҫитиччен Улатӑр хулинче пурӑннӑ. Ун хыҫҫӑн Михайловсен ҫемйи Ҫӗпӗре куҫса кайнӑ. Омск ҫывӑхӗнчи совхозра ӗҫлеме пуҫланӑ, каярахпа Константин Иванович хулана пурӑнма куҫнӑ. Евгений вара Омскри каҫхи вӑтам шкулта вӗренме тытӑннӑ. Хулари ҫамрӑк рабочисен 28-мӗш шкулӗнче ӑна питӗ лайӑх пӗлеҫҫӗ.

1965 ҫулхи ҫуркунне саккӑрмӗш класра вӗренекенсем экзамен тытнӑ. «Ульяна Громовӑпа Олег Кошевой пӗрремӗш хут тӗл пулни» темӑпа изложени ҫырнӑ вӗсем.

«Уля Громова, Анатолий Попов, Виктор Петров тата унӑн ашшӗ ларса пыракан лав сӑрт урлӑ каҫса ҫитнӗ-ччӗ ӗнтӗ, сасартӑк тӳпере, таҫта ҫӳлте, моторсем хӑрушшӑн кӗрлени илтӗнсе кайнӑ, хӗвеле хупласа, пуҫ тӑррингченех нимӗҫсен пикировщикӗсем вӗҫе-вӗҫе иртнӗ, шоссе тӑрӑх пулеметпа пеме пуҫланӑ...»

Юлашки парта хушшинче ларакан Женя Михайлов текста тимлӗн итлет, тӑрӑшса ҫырать: «...Лав ҫинче Уля пӗччененех ларса юлчӗ. Мӗншӗн тулӑ хушшине сикмерӗ

вăл та — ăнланаймарĕ. Хăраса ӳкнĕ лашасем сасартăк хыттăн тапса сикрĕç, вăл урапа çинчен тепле çеç сирпĕнсе тухса ӳкмерĕ...»

Халĕ изложение паттăр йĕкĕте, хĕре пулăшас тесе, лашасем умне хăюллăн чупса пынă Олега, кĕртмелле. Женя Михайлов чĕринче Олег Кошевой хăйне уйрăм вырăн йышăннă. Юлашки йĕркесене çырса, изложение учителе парсан, вăл шухăша кайрĕ. «Манăн та, Олег пек, кама та пулин инкекрен çăлассчĕ, алă тăсса парасчĕ. Михайлов, тесе паллаштарăттăм. Аçтан ĕнтĕ! Вăрçă вăхăчĕ мар вĕт. Пикировщиксем те çук, утсем те чĕвен тăмаççĕ...»

Математикăпа экзамен панă чухне пĕр самант хумханчĕ вăл. Вунвиççĕмĕш билет лекрĕ ăна. Ара, вунвиççĕмĕш телейсĕр, теççĕ мар-и çав? Тимлесе шутланă хыççăн Женя ыйтусем çине ответлеме тытăнчĕ, унтан задачăсем шутланă хута лӳчĕркесе, доска патне тухрĕ.

Мария Даниловна Молоденкова, математика учителĕ, çав экзамена паян кун та лайăх астăвать. Урокран килсен, вăл Женя пирки нумай калаçса пачĕ.

— Пиччĕ юрататчĕ вăл математикăна. Шкулта вĕреннĕ чухне кашни çулах математика кружокне çӳретчĕ. Унăн математикăллă фокусĕнчен ачасем пурте тĕлĕнетчĕç. Пĕррехинче вăл, цифрăсем ӳкернĕ карточкăсем туса, ачасене панă. Вĕсем ăна ултшар цифрăллă темиçе карточка кăтартаççĕ. Женя пĕр самантрах вĕсен суммине асра шутласа кăтартать.

Обществăлла ĕçе активлă хутшăнатчĕ. Вăл, пĕлетĕр-и, çав тери хаваслă ача, çӳçĕсем арпашăнса кайнă, сăн-пичĕ хĕрачанни пек хитре, килĕшӳллĕ. Имшерккерех пек туйăнатчĕ, анчах чунĕ мĕн тери ырăччĕ унăн!

Евгений Михайлов пирки Омск хулинчи грузсем турттаракан 4-мĕш автотранспорт предприятийĕсенче те ăшă сăмахсем нумай калаçса пачĕç. Кунтах унăн ĕçри карточкине кăтартрĕç. Унта яланхилле кăтартнисем: иккĕмĕш разрядри слесарь, каçхи шкулта вĕренет. Юлашкинчен çапла çырса хунă: 1967 çулхи июнĕн 7-мĕшĕнче Совет Çарне кайнă май ĕçрен хăтарнă. Карточкăн çӳлти кĕтессинче шурă çӳçлĕ, кăвак куçлă каччă сăнӳкерчĕкĕ.

Кадрсен пайĕнче ĕçлекен И. И. Бражниковпа пĕрле автомашинăсем юсакан мастерскойне кайрăмăр.

— Уссури тăрăхĕнчи чикке лайăх пĕлетĕп, хам та унта чылай хушă службăра пулнă,—тет вăл.—Çакна вара нихçан та ăнланса илейместĕп: мĕн тери ăссăрлăх патне çитнĕ Мао-Цзе-дун ушкăнĕ, мĕн тери минретсе çитернĕ

вăл халăха. Астăватăп, питĕ туслăччĕ эпир Китай хресченĕсемпе, пĕр-пĕрин патне час-часах хăнана çӳреттĕмĕр.

Мастерскойри диспетчер пӳлĕмне, Евгений çара кайиччен ĕçленĕ вырăна, унăн юлташĕсем пухăнчĕç.

— Пултаруллă, лайăх каччăччĕ. Кăнтăрла вĕренме, иккĕмĕш сменăра ĕçлеме çăмăл пулнă-и? Анчах вăл хушнă ĕçе яланах тăрăшса тăватчĕ,—аса илет Александр Мордвинов диспетчер.

— Шăпах ун пеккисене, çирĕп те лăпкă ачасене, чикĕри службăна илеççĕ те,—хушса хурать мастерской начальникĕ Г. С. Иванов.

Çак мастерскойра ĕçлекен тата тепĕр çын герой-пограничниксенчен пĕринпе тăванлă иккен. Кунта диспетчер пулса Эрнст Дмитриевич Бубенин, Анат Михайловкăпа кӳршĕллĕ застава начальникĕн, Совет Союзĕн Геройĕн Виталий Бубенинăн тăван пиччĕшĕ ĕçлет.

Эрнст ĕçре пулмарĕ. Унпа эпир кайран калаçрăмăр. Даманский утравĕ патĕнче пуç хунă Иван Стрельниковăнни пекех, Бубенинсен çемйи те йышлă, туслă çемье. Виталийпе Эрнстсăр пуçне, вĕсен тата икĕ шăллĕпе виçĕ йăмăкĕ пур.

Эрнст Дмитриевич Евгений Михайлов слесаре лайăх пĕлнĕ, çара каяс умĕн Куйбышевски районти çар комиссариатне тăратнă характеристика çине вăл алă пуснă.

* * *

Михайловсен çемйи нумай пулмасть икĕ пӳлĕмлĕ çĕнĕ хваттере пурăнма куçнă. Амур поселокĕнче вĕсен çуртĕ — 28-В номерлĕ çурт, 46-мĕш хваттер. Килти сăнӳкерчĕксен альбомне пăхатпăр, салтак чикĕри заставăран ярса панă çырусене вулатпăр.

Женя çырăвĕсенче яланах пĕр сăмахсем: пурте лайăх, служба çăмăл мар, анчах йывăррине сисместĕп. «Манăн пурте йĕркеллĕ, сывлăх лайăх, сире те ырлăх-сывлăх сунатăп,—тесе çырать вăл.—Кунти климата хăнăхрăм. Халĕ килнĕ çулхи пек мар ĕнтĕ. Утмăл тăххăрмĕш çулхи кĕркунне, тен, маларах та, киле пыратăп». Çак йĕркесене вуланă кун амăшĕ хăй тĕллĕн пăшăлтатнă: «Телей пултăрччĕ сана, ывăлăм, киле чиперех çаврăнса килмелле пултăрччĕ».

«Çĕркаçах çумăр çурĕ, ирпе çулсем тăрăх çӳреме те май çук, вĕсем яка пăрпа витĕннĕ. Машинăсем икĕ кун хушши вырăнтан та хускалаймарĕç. Уссури çинче пăр ларман-ха».

Нина Степановнăн, çырăва вуланăçемĕн, ывăлне хавхалантарас килнĕ, вăл ачи шăнса пăсăласран шикленсе ÿкнĕ. Чикĕре кирек мĕнле çанталăкра та сыхă тăмалла вĕт-ха, чирлесе кайĕ тата.

Женя ашшĕпе амăшĕ хăйсен çырăвĕсенче яланах ывăлĕн çарти вĕренĕвĕпе, ĕмĕчĕсемпе интересленнĕ, малалла вĕренме шут тытать-и е предприятиех ĕçлеме таврăнать, —пĕлесшĕн пулнă ывăлĕн шухăшне. Вăл çапла çырнă: «Манăн халĕ нумай тÿсмелле-ха». Амăшĕ вăл мĕн каласшăн пулнине, ывăлĕ пăлханнине тĕпĕ-йĕрĕпех ăнланса илеймен, анчах амăшĕн чĕри чикĕре лăпкă маррине, ывăлĕ вĕсене кун пирки нимĕн те пĕлтерменнине туйнă. Пĕррехинче Женя çырăвĕнчи сăмахсем килте пурне те шухăша янă: «Майĕпен каллех «лешсемпе» «ыталашатпăр».

Тепĕр çыру килсен, амăшĕ лăпланнă: «Чикĕри пурнăç интереслĕ. Кунта службăна хăвăрт хăнăхатăп, çынсемпе туслашатăп. Застава пĕр кил пек, анчах çыннисем нумаййăнрах. Чăн та, тепĕр чухне ĕçлемелли те тупăнать. Ку вăл питĕ кирлĕ».

Константин Ивановичпа Нина Степановна ывăлĕн «ĕçĕ» мĕнле ĕç пулнине ăнланман. Паллах, çĕр чавни е чечек шăварни мар ĕнтĕ. Чикĕ вăл чикĕ. Анчах Евгений кун пирки, ытти чухнехи пек, ахаль ĕç çинчен çырнăн,— лăпкăн çырса пĕлтерет вĕт...

Час-часах вăл сăнÿкерчĕксем ярса панă. Ывăлĕн маттур, илемлĕ сăнне курсан, Нина Степановна чĕри савăнăçлăн тапнă. Акă, казармăра ÿкерсе илни. Женя кăштах малалла ÿпĕнсе, халь-халь чупса каяс пек чĕррĕн тăрать. Хулпуççийĕсем сарлакаланнă, салтак тумтирĕ питĕ çыпăçуллă. Акă, Евгений чикĕри тусĕсемпе. Пурте паттăр та хавас ачасем, сăн-пичĕсенче уçă кулă йăлтăртатать. Акă, вăл кĕçĕн сержант пакунĕсемпе, симĕс картузпа. Кăкăрĕ çинче — комсомол значокĕ, аслă салтак-спортсмен паллисем.

* * *

Çăмăл пулман Евгений Михайловăн кĕске пурнăçĕ. Вĕсен çемйи Куйбышев урамĕнче пĕчĕк çуртра, 22-мĕш профтехучилище çывăхĕнче пурăннă. Ашшĕпе амăшĕ çав училищĕре ĕçленĕ. Женя пĕчĕклех ашшĕне — училищĕри кочегара пулăшма тăрăшнă. Вĕренме те юнашарти 28-мĕш шкула кайнă. Кăштах çитĕнсен, хăй пăс хуранĕсен кăмакисем патне тăнă. Кайран автохуçалăха кĕнĕ, автомо-

бильсем юсакан слесарь профессине туяннӑ. Пĕр вӑхӑтрах вӑл шоферсен курсĕнче вĕреннĕ, пурнӑçри аслӑ çул çине тухнӑ.

Хӑй чикĕри службăна лекнине пĕлсен, мĕнлерех савăнса ӳкнĕ Евгений! Хăйĕнчен аслăрах воинсемпе заставăри офицерсем пулăшнипе кĕске вăхăтрах хăйĕн çар специальноçне вĕренсе çитнĕ, çĕршыв чиккине шанчăклă хураллакансен ретне тăнă. Службăри пĕрремĕш çулах ăна «Отличнăй пограничник» значокпа наградăланă. Унăн командирĕ, хăюллă пограничник, Китай провокаторĕсемпе çапăçса вăхăтсăр вилнĕ офицер, Совет Союзĕн Геройĕ Иван Иванович Стрельников пулнă.

Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чикĕри заставăран килнĕ документсемпе çырусем, Женя вĕреннĕ кĕнекесем, вăл çырнă тетрадьсем Михайловсен килĕнче чи хаклă реликви пек упранаççĕ, вĕсен ашшĕпе амăшне, вĕсем патне пыракансене аслă ывăлĕ çинчен каласа параççĕ. Евгений Михайлов пограничник паттăрлăхĕ пирĕн çитĕнекен ăрушăн Тăван çĕршыва чĕререн юратнин сутă тĕслĕхĕ пулса тăрать.

«Сирĕн ывăлăра, социализмла Тăван çĕршыва тӳрĕ кăмăлпа, паттăррăн сыхланă воина, унăн çарти тусĕсем, воин-пограничниксем, пĕтĕм совет халăхĕ яланах чĕрере упрĕç»,—çакăн пек çырса янă Нина Степановнăпа Константин Иванович патне Совет Союзĕн чикĕри çарĕсен командованийĕнчен.

Чăваш республикинче çуралса ӳснĕ çирĕмри çамрăк салтака, Дамански утравĕ патĕнче Тăван çĕршыв чиккине чĕри тапма чарăниччен сыхланă Евгений Константинович Михайлов пограничника эпир нихçан та манмăпăр. Пирĕн земляк чăн-чăн герой пек çапăçнă. Аманнă пулин те, кĕçĕн сержант Михайлов, пăр çинче выртса, маоистсен сĕмсĕр эшкерĕ çине пенĕ. Юлашки патрон юлмиччен. Ӳсĕр провокаторсем унран мăшкăлланă, аманнăскере, штыксемпе чиксе пĕтернĕ.

Паян Евгений Константинович пирĕнпе юнашар çук. Вăл паттăрлăх кăтартса, тăван çĕршыва тăшмансенчен сыхласа вилчĕ. Анчах та вĕсен килĕнче халĕ те унăн чикĕре тăхăнса çӳренĕ пограничник карттусĕ уйрăм сĕтел çинче выртать. Кунтах Женя çартан çырнă кĕске те шухăшлă çырусем, заставăран янă фотоальбом, çар хаçачĕсем... Сĕтел умĕнчи стена çинче Евгений Михайловăн пысăк сăнӳкерчĕкĕ çакăнса тăрать.

Çак сĕтел умне, Евгений Михайлов пограничник патне, яланах пионерсемпе шкул ачисем çӳреççĕ, çĕнĕрен илнĕ пионерсене кунта хĕрлĕ галстуксем çыхса яраççĕ.

Анат Михайловка поселокĕ патĕнчи заставăра пирĕн тантăшсем пуç хунă. Вĕсем вырăнне çĕнĕ боецсем, Тăван çĕршыва яланах чыслăн сыхлама тупа тунă воинсем, строя тăнă.

Çулсем иртнĕ хыççăн Инçет Хĕвелтухăçĕнче легендăна кĕнĕ герой Сергей Лазо каланă сăмахсем пушшех уççăн илтĕнеççĕ: «Эпĕ халĕ тăракан çĕршĕн, çак вырăс çĕрĕшĕн, эпир пуç хурăпăр, анчах ăна никама та памăпăр».

* * *

Чăваш ачи Евгений Михайлов сан салтаку пулнă, Россия çĕрĕ. Тăшман пули ун чĕрине малалла тапма чарса лартнă, анчах унăн чикĕри тусĕсем паян та Уссури çыранĕнчи çӳллĕ тусем çине улăхаççĕ, çуркунне нумай-нумай тĕслĕ чечексем çурăлса илем кӳрекен тавралăха тимлĕн сыхлаççĕ. Çак илемлĕ çĕре, Совет çĕрне, Женя Михайлов та чĕререн юратнă...

## Çенкер пакунлисем



Çын çуралсанах ун чěринче пурне те пěлес, курас туртăм вăранать, пурне те вăл хăй аллипе тытса пăхса, хăй туса пăхасшăн.

Йěлме йěлтěрпе чăнкă тăвайккинчен вирхěнсе аннă чухне ачан чунě çунатланса-хăпартланса каять. Вара вăл тата вăрăмрах та чăнкăрах тăвайкки шырать.

Çыннăн çак текех хăюлăхпа хастарлăх çулěпе каяс пархатарлă туртăмě ěмěр тăршшěпех пыринччě!

Анчах та вăхăт иртнěçемěн пěри ура канлěхне хăнăхать те, пурнăçра мěн йывăрри пур — унран пăрăнса иртет, çыран-шырлан хěрринчен аяккарахри такăр çулсене шырать. Тепри... çав «тепри» пуль ěнтě Арктикăна, океансене, тўпене, космоса парăнтарать.

Вěсене курнă-пěлнě çын асăрханах ěнтě: вěсем ялан чăнкăраххине шыраççě. Самай çўллě ту çине хăпарнă темелле ěнтě, ăна тата çўллěреххи кирлě. Йывăрлăхсене асăрхамаççě те тейěн, пурнăçра вěсем тěллев лартаççě те ěмěр тăршшěпех çавăн патне туртăнаççě.

Çăмăл пулман Геннадий Иванова та, Шупашкартан инçех мар, Ильинкăра, çуралса ўснěскере, авиацире службăра тăнă чухне. Ăна ěнтě, пиçсе çитнě авиатора, сывлăхě начар тесе, сывлăш-çар шкулěнчен кăларса яраççě. Летчик пулас ěмěт татăлать. Анчах та Геннадий çурма çулта чарăнса аяккалла пăрăнакан йышши мар. Ăна хěрхенсе ăсатакан çывăх юлташěсемпе сывпуллашнă чух вăл куç харшисене сивлеккěн туртăнтаркаласа илчě те:

— Тěл пулăпăр-ха авиацирех,—терě.

— Пăрах эс ку шухăша,—чěрене чěпěтсе илчěç тахăшěн сăмахěсем.—Авиаци вăл нишлисем валли мар. Сывлăх кирлě, тусăм.

Çапла, сывлăх чаплах марччě çав. Хăй вăхăтěнче чечче шатрипе те чирлесе выртнă, ўпке шыççине те тўссе

ирттернӗ. Врачсенчен йалӑнса ыйтнӑ тенӗ пек шкула вырнаçнӑччĕ. Акӑ, каллех чир. Сывӑ пул, вĕренӳ. Каллех вӑл хӑй малтан пулнӑ полка каять. Қама каласа парӑн чĕре çинчи йывӑр хуйха? Вӑй-халран юлташсемпе тан пулаймарӑм темелле-и?

Тӑван эскадрильйӑна çитме темиçе çĕр çухрӑм. Вӑл подразделени — Геннадие летчиксен шкулне ӑсатнӑ подразделени. Медицина пункчĕ те çавах, çакӑнта хутсем туса пачĕç ӑна вĕренме кайма. Геннадий халь чи малтан унта кĕрсе врачпа калаçса пӑхма шутларĕ: мĕн тумалла, ӑçта каймалла ӳлĕм?

Қукша пуçлӑ, пĕркеленчĕк питлĕ, самаях çулланӑ çар врачĕ ун сӑмахне хӑлхана чиксе итлерĕ.

— Вĕçмесессĕн те, авиацире службӑра тӑма чӑрмав çук. Физкультурӑпа, спортпа туслашӑр... Ӑнланмалла-и?

Геннадий, çар чысне туса, сылтӑм аллине карттусĕ патне çĕклесе антарчĕ те тухрĕ. Паллах ĕнтĕ, кунсерен физкультура тума пулать. Паян вун çухрӑм çуран утса тухнӑ. Қу пуçламӑшĕ тейĕпĕр. Анчах та хӑвӑн подразделенирен аякка кайма яланах май килмест. Çарта салтакӑн кашни утӑмнех минутсене пайланӑ! Çакна пӑхмасӑрах, командирсемпе политработниксем йĕкĕтĕн ĕмĕтне татмарĕç. Спорт залĕнче ытларах тытӑнса тӑма ирĕк пачĕç. Қунта Геннадий опытлӑ спортсменсем тĕрĕслесе, пулӑшса тӑнипе йывӑр япаласем çĕклеме хӑнӑха пуçларĕ. Қире пуканĕсене уйрӑмах килĕштерчĕ вӑл.

Ывӑç тупанĕсем хӑмпӑлчӑланса тухрĕç, ĕç йывӑрланса пычĕ. Мĕнех, сайра хутра чупас та пулать. Салтаксем ӑна: «Қирлĕ мар ĕçе тытӑнтӑн эсĕ», — тесе ӳкĕтлеме пӑхрĕç. Мĕн усси унран? Анчах та Геннадий хӑйĕн «усӑр ĕçне» пӑрахманнине кура, аллисене сулчĕç кӑна.

Геннадий аллинче каллех кире пуканĕсем. Ывӑç тупанĕнче хӑмпӑлчӑланса тухнисем хытса ларчĕç, ыратми пулчĕç. Çапла иртсе пычĕ вӑхӑт.

Пĕррехинче командир Геннадие хаваслӑ хыпар пĕлтерчĕ: тӑхтаса тӑмасӑрах хулана командировкӑна тухса каймалла — ӑмӑртӑва. Салтаксем кун çинчен нимĕн те пĕлмерĕç-ха. Хӑй ӑçта, мĕн тума кайнине вӑл никама та шарламарĕ. Пĕлсен, варĕсене тытсах кулĕç тата: кур-ха, хулана паттӑрсемпе вӑй виçме каять! Анчах та приказа итлемеллех! Çарта командир приказне никам та сӳтсе явса тӑмасть, ӑна ним сӑмахсӑр пурнӑçлаççĕ.

Çапла вара, Геннадий хулари вӑйлӑ çынсем хушшине вӑй виçме килсе лекрĕ.

Иванов помост çине тухрĕ. Икĕ пăт таякан кире пуканне тытрĕ те шутлама тытăнчĕ: çӳлелле, аялалла — пĕрре; çӳлелле, аялалла — иккĕ... Алă căсла пуçларĕ. Алă туни сăрăлтатса чĕтрет... Йĕри-тавра кăшкăраççĕ, алă çупаççĕ, шăхăраççĕ.

— Атя, салтак! Татах!.. Тата тепре!...—тенине çеç ăнланмалла.

Анчах та миçе хутчен çĕклеме пулать. Алă хурçă мар, ахаль те ĕнтĕ вăтăр хут ытла çĕкленĕ, хĕрĕх патнелле çывхарса пырать. Чĕркуççи кĕç-вĕç хуçланса анать, куç хуралса килчĕ. Геннадий кире пуканне çĕре лартрĕ те, сулланса, аяккалла кайса тăчĕ. Ун вырăнне сарлака хулçурăмлă, тĕреклĕ кĕлеткеллĕ аслă сержант-сверхсрочник тухрĕ. «Хула чемпионĕ»,—пĕлтерчĕç куракансене радиопа. Кире пуканĕ малтан çăмăллăнах аялтан çӳлелле çĕкленне-çĕклене анчĕ, кайран, çирĕмпе вăтăр хушшинче пулас, такăнкалама тытăнчĕ, йывăррăн та тикĕс маррăн çĕкленсе анчĕ. Спортсмен çапах та кире пуканне Геннадирен темиçе хут ытларах çĕклесе антарчĕ. «Ан тив, пултăрах, мана рекордсем кирлĕ мар вĕт»,—лăплантарчĕ хăйне хăй Иванов рядовой. Чăннипе илсен, рекорчĕ пур та иккен. Ăмăртура вăл иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Палламан çынсем те, подразделенирен килнисем те чунтанах ăна çитĕнӳпе саламларĕç.

Апла сывлăхĕ пит япăхах мар пулас ун. Халь ĕнтĕ нишлĕ тесе калаймаççĕ! Сывлăша çĕкленме командиртан ирĕк ыйтса пăхас мар-и? Геннадий унта кирек мĕнле ĕçпе те килĕшĕччĕ. Вĕçесчĕ кăна. Вĕçесчĕ!

Офицер умне те пырса тăрас килет, анчах та хĕрӳ ĕçсем ăшри ыйтусене пытарса пычĕç. Кĕçех тата уяв перçе çитрĕ. Уяв ячĕпе пухнă чаплă пухура командир приказ вуласа пачĕ: «Çарпа политика хатĕрленĕвĕнчи çитĕнӳсемшĕн Иванов Геннадий Иванович рядовоя тав тăвас тата çуралнă çĕршывне вунă кунлăх отпуска ярас».

Акă тăван Ильинка. Уй-хир çийĕн эрешмен картисем кĕмĕлленсе вĕçеççĕ. Кăштах сивĕннĕ тӳпе тĕпсĕр тарăн та сарлака курăнать. Атăлĕ вара, вăл çара кайиччченхи пекех, мăнаçлăн сарăлса лăпкăн юхса выртать.

Шутлă кунсем часах тухрĕç. Салтакăн кĕске отпускĕ, сисмесĕрех иртсе кайрĕ пулин те, вăй хушрĕ, кăмăла уçрĕ. Çĕнĕ вăй-халпа таврăнчĕ Геннадий хăйĕн подразделенине.

Вăл çав-çавах хăйĕн кăмăл туртăмĕпе пурăнчĕ — малтанхи пекех ӳркенмесĕр спортпа вăхăт иртterчĕ. Салтак-

сем ăна ĕнтĕ килĕштерсе пăрахрĕç, вăл вĕсене спорт секцийĕсене чĕнсен те, турткаланса тăмарĕç. Кĕçех ăна пухура вырăнти комсомол организаци секретарьне суйларĕç.

Салтак пурнăçĕ халь тата илĕртӳллĕрех пула пуçларĕ. Туссем йышлă, ĕç нумай. Çайрантарах туссем ăна мĕншĕн юратнине Геннадий хăй те ăнланчĕ. Туслăхра хăй яланах тӳрĕ чунлă, спортра хăюллă пулнă; кашни йывăр ĕçрех малтанхи утăма хăй туса пăхма тăрăшнă. Унпа пĕрле — ыттисем те. Мĕн вара, пĕр вырăнта тапăртатса тăмалла-и? Çук! Тӳсси курманни питĕ нумай-ха. Сăмахран, парашютпа та сикмен.

...Акă, пĕрремĕш хут сикнĕ. Иккĕмĕш хут... Виççĕмĕш хут... Çапах та хăрушă, чун çӳçенет. Çын пурне те хăнăхать, теççĕ. Хăрани те, шик те майĕпен иртсе пырать. Анчах та, сирена çухăрса ярсан, люк уçăлсан, тĕпсĕрлĕхе пăхса илетĕн те, темшĕн-çке чĕре малтанах тапма пăрахнă пекех пулать, чун çӳçенет. Çĕр пичĕ шурă хут листи çине ӳкерсе хунă пекех пĕчĕк курăнать, аякри ял çурчĕсене аран-аран уйăрса илетĕн. Çанçурăм сăрăлтатса илет, анчах — сикмеллех.

Тен, çитет те пуль кун чухлĕ сикнипе? Çавăнтах чĕрене çурса аса килеççĕ: «Авиаци—нишлисем валли мар»,—тенĕ сăмахсем. Çапла, шкулта пĕрле вĕреннĕ туссем ĕнтĕ халь сывлăшра çар самолечĕсем çинче вĕçеççĕ, Геннадий мĕнпе япăхрахчĕ вĕсенчен?

Çакăн пек шухăшсемпе Геннадий каллех сывлăша çĕкленет.

Сывлăшра хăрасси-шикленесси ĕнтĕ унăн иртсе пычĕ. Ахăртнех, пĕр çĕнтерӳ турĕ пулас вăл. Тата мĕнле çĕнтерӳ тумалла? Хăшĕ тепĕр тăвĕ? «Тепĕр тăвĕ» тĕлне ăна Алексей Щеканов офицер, спорт мастерĕ, кăтартрĕ. Парашютпа сикнĕ çĕрте е кашни летчиках, е лайăх спортсмен тăвайман япаласем те пур-ха. Иванов та тĕрĕслесе пăхрĕ—çаплах. Çĕрелле ирĕклĕн ӳкнĕ чухне кĕтмен-çĕртен чун-чĕрене çĕнĕ туйăм-сисĕм çавăрса илет, малта уçман тĕнче тăрать тейĕн.

Самолетран уйăрăлсан, алăсене саратăн та вĕсем санăн çунаттусем пекех туятăн. Ывăç тупанне кăшт çавăрсанах вăйлă сывлăш юхăмĕ кĕлеткене аяккалла ывăтса ярать. Ывăç тупанĕсене тĕрĕс çавăркаланипе те урасене кирлĕ пек саркаласа пынипе кăна кĕлеткене сывлăшра йĕркеллĕ тытма пулать. Çĕр çинчен шурă пусма татăкĕпе команда параççĕ — сальто ту... чикеленсе ил... Пĕр çеккунт кă-

на кăтартаççĕ. Хăвăртрах асăрхама тăрăш, сывлăшра ирĕклĕн ӳкес вăхăт питĕ кĕске.

Геннадий, çеккунтсене шутласа, парашют ункине туртать. Пурçăн парашют сывлăшпа тулса карăнать те, чĕтренме тытăннă çакăсенчен туртăнса, хаплатса илет. Çав самантрах парашютист пуçхĕрлĕ çаврăнса ӳкет. Икĕ стропа, икĕ çакă, урана явалаеа илсе, кĕлеткене кутăн тăрататççĕ, ĕнтĕ кирлĕ пек ӳкессине йĕркелесе пыма та, çĕр çине анса ларма та майĕ çук.

Хĕлĕх пек карăннă çинçе стропа çирĕп. Çĕршер килограмм йывăрăша чăтмалла тунă ăна, хăрах алăпа татса яраймăн. Çĕр ĕнтĕ юнашарах. Геннадий вара стропа патне шăлĕсемпе туртăнса çитсе кăна урине вĕçертме пултарчĕ. Шăлĕ гӳсеймерĕ-тӳсеймерех — тĕпренсе-катăлса кайрĕ.

— Ну, мĕн, сике-сике тупрăн хăвна валли?— терĕ салтаксенчен тахăшĕ, Геннадин юнланнă шăл тунине курса.

Иванов илтмĕш пулчĕ кăна кун пек сăмахсене. Ахăртнех, шăп çак вăхăтранпа пулас унăн чĕри харсăрлăхпа тула пуçларĕ, вăл савăнăçпа тулса, хăвăрт-хăвăрт тапрĕ. Геннадий ăнланчĕ: вăй-хал хутшăнчĕ, вăл парăнтарма пултарайман чăрмав текех çук та пулĕ.

Округра мала тухассишĕн ирттерекен ăмăртăва хутшăнма хатĕрленнĕ чух пĕррехинче Геннадий парашютпа çĕрле сикрĕ. Кирлĕ вырăна анса тăрас тĕлĕшпе опытлăрах та ăстарах пулнăран унăн чи малтан сикмеллеччĕ те, паллăсем парса, ун хыççăн килекен ушкăна тĕрĕс анса ларма пулăшмаллаччĕ. Сывлăшра хĕрлĕ çутă ялкăшса илчĕ, ытти юлташсем ун хыççăн вирхĕнчĕç. Анчах пĕр спортсменĕ, парашютне тĕрĕс тытса пымаснипе, Иванов çумнех çывхарчĕ те строписемпе парашют куполне çапăнчĕ. Геннадий чул пек аялалла анса кайрĕ. Çапла ӳкнĕ май хăвăртлăх ӳснипе парашют каллех сывлăшпа тулса карăнчĕ. Тепĕр парашютисчĕ ӳкме тытăнчĕ.

— Стропасене кас!—кăшкăрчĕ вăл Иванов тĕлĕнчен иртнĕ чух.

— Лăпкăрах пул, нимĕн те касма кирлĕ мар!—лăплантарчĕ Геннадий хăйĕн юлташне. Тепĕр темиçе çеккунтранах парашютистсем, пĕр-пĕринчен уйрăлса кайса, йĕркеллех çĕре анса ларчĕç. Унтан, паллă парса, юттисене вырăна анса ларма пулăшрĕç.

Пуринчен ытларах асра юлни ку мар-ха... Тепри. Ун чухне вăл тăватçĕрмĕш хут парашютпа сикнĕччĕ...

...Парашют куполӗ ҫӗр ҫине хуҫланса ӳкрӗ. Йалтӑрикка пурҫӑн умра выртать. Йӗри-тавра — ытарайми тавралӑх. Ҫывӑхри хыр вӑрманӗ, кун каҫа хӗвел питӗнче вӗриленсе тӑнӑскер, ырӑ шӑршӑ сарать. Ҫакӑнпа, пӗрлех аэродромран уй-хир шӑрши, чуна ачаран ҫывӑх шӑршӑ, хӑпарать. Ҫемҫен авӑнса чӳхенет ҫилпеле пурҫӑн пек кӑлкан, ырӑ шӑршӑллӑ хир курӑкӗ сарӑ ҫеҫке чашкине сулласа ларать. Темскер, питӗ аякри, ҫывӑххи, ҫарта пулнӑ ҫулсенче манӑҫа туха пуҫланӑскер, ҫав тери ырӑ туйӑм чунра хускалса илчӗ, вӑранчӗ, кӑмӑла пӑлхатса ячӗ.

Ахӑртнех, сӑлтавсӑр мар пулӗ. Ҫамрӑк чух ӗмӗтленнӗ ӗмӗт ҫитсе пырать. Ҫарпа политика хатӗрленӗвӗн планӗпе пӑхса хунӑ пур нормативсене те панӑ.

Ахальтен мар халь вӑл, Геннадий Иванов аслӑ сержант, сенкер пакунсемпе ҫӳрет, мухтавлӑ Совет Авиацийӗнче службӑра тӑрать.

# Шухă йĕкĕт



Вакун кантăкĕнчен пăхса пыратăп. Экран çинчи пек, ўкерчĕк хыççăн ўкерчĕк улшăнать, тин кăна пĕчĕк станцин сайра ларса тухнă çурчĕсем вĕлтлетсе иртрĕç, акă ĕнтĕ çĕлен пек юханшыв пуйăса хăвалать. Унăн сылтăм çыранĕ хĕррипе лутра, кăтра та симĕс тĕмĕсен речĕ хăю пек тăсăлать.

— Сирĕн пата вырнаçма юрать-и, папаша?—купе алăкне уçса пуçне чикрĕ йăл-йăл кулкалакан кĕçĕн сержант. Пăхасса хăй сатуррăн пăхать, пит-куçĕнчен хаваслăх, вăй-хал пĕрĕхет. Купе те сасартăках çуталса кайнă пек пулчĕ. Акă çул юлташĕ те пур. Тин кăна ларчĕ пулас...

— Кĕрĕр, иртĕр. Вырнаçăр килти пек.

«Шухă йĕкĕт»,—шухăшларăм эпĕ,—кĕнĕ-кĕменех мана мĕнле чĕнмеллине те тупрĕ». Вăл вара хăвăрт кăна хăйĕн салтак ăпăр-тапăрне унта-кунта вырнаçтарчĕ те, ларчĕ, сывлăш çавăрчĕ.

— Қайрăмăр апла. Сирĕн тата папаша, инçе каймалла-и?

«Папаша» тесе чĕнни вăл аслă çын умĕнче хăйне ытла ирĕккĕн тыткаланă пек туйăнчĕ мана. Эпĕ ирĕксĕртереххĕн тавăрса каларăм та, пĕчĕк юханшыва сăнаса, кантăк енне çаврăнса лартăм. Чылайччен пуйăспа юнашар чупса пырĕ-и вăл? Çук, леререх ав, аяккалла пăрăнать. Мăнкăмăллăхĕ пур. Қурать: хăваласа çитес çук — пăрăнса юлчĕ.

Эпĕ чĕнменнине йĕкĕт хăйне май ăнланчĕ.

— Çулланнă пассажирсемпе пĕр купене лекессинчен япăххи мĕн пур-ши,—хăйĕн шухăшĕсене кĕскен пĕтĕмлетнĕ пекрех каласа хучĕ вăл.—Текех ыйхă пусать вĕсене. Санăн каламалла та, кулма та юрамасть, чăрмантаратăн, теççĕ. Политика вĕренĕвнех малалла тăсас пулĕ.

Вăл çар хаçатне саркаласа тытрĕ те тăваттăмĕш страницăра тем пăхкаласа ларчĕ. Анчах та пăхсах курăнать: вуласах вулаймасть хăй — тем пирки кăмăлĕ хускалнă, унăн мĕн те пулин тумалла е калаçмалла. Эпĕ ун çине пăхмасăрах вăл манпа кăмăлсăррине туйса пытăм. Кĕçех ак вăл мана мĕнле те пулин сăмахпа тĕртсе илет.

Чăн та.

— Папаша, кăнтăрла каçпа çывăрнинчен тутлăрах-и ыйхă?

Эпĕ кулса ятăм.

— Эпĕ çывăратăп тесе шутларăр-и эсĕр? Эпĕ тавралăхпа киленсе пыратăп. Сирĕн питĕ калаçас килет-и? Тархасшăн, йăпатма пултаратăп эп сире. Пĕлетĕр-и, çĕр çинче питĕ илемлĕ те ăшă сăмах пур. Мĕнле юрлаççĕ-ха юрăра: «Наше слово гордое «товарищ» нам дороже...»

— Ăнланатăп,—пӳлчĕ вăл мана,—эсир «папаша» тенĕшĕн кӳрентĕр... «Юлташ» темеллеччĕ...

— Кӳренмеллиех çук-ха кунта, анчах сăмахĕ вăл пит культурăллă илтĕнмест...

— Çав усал йăларан ниепле те хăтăлаймастăп эпĕ,— мана пӳлсех калаçма тытăнчĕ вăл.—Командир та пĕрре мар асăрхаттарнă. Ун умĕнче çапах та хама хам алра тыткалатăп-ха. Халĕ вара отпуска каятăп, хама хам килти пек ирĕклĕ туяс килет.

— Мĕнле вара, сирĕн шутпа, çарта пĕр культура, килте урăххи пулмалла-и?

Ман çул юлташĕ темскер хирĕç калама тăчĕ те — шарламарĕ, ман çине ӳпкевлĕн пăхса илчĕ кăна. «Хăвăрт тавçăрса илекен çын эс, папаша. Юрĕ ĕнтĕ, ху та çамрăк пулнă»,—тенĕ пек пăхрĕ вăл.

Сăмах татăлчĕ. Кĕçĕн сержанта вăрттăн сăнаса ларкаланăçемĕн манăн кăмăллăн кулас килсе каять. Пулаççĕ-çке çавăн пек ырă айвансем! Пит-куçĕнчен пăхсах вĕсен шухăш-кăмăлне пĕлме пулать. Куратăн та çавăн пек çынна, пăхатăн куçĕнчен, тĕлĕнетĕн, вĕсем, ун куçĕсем, çăлкуçĕ пек таса. Ирĕксĕрех йăл кулса илетĕн вара.

Унăн кăмăлне тупас тесе, эпĕ сăмах хушрăм:

— Отпуска ячĕç пулсан, служба аван пырать-ха сирĕн, Семен?

Пĕр хушă вăл ман çине, асамçă çине пăхнă пек, анраса кайнăн пăхса ларчĕ те сулахай аллине хăвăрт сĕтел çинчен илчĕ.

— Ман ята ăла çинче вуласа пĕлтĕр-и? Ку вăл — ача чухне ухмахланни.

Çак самантра пирĕн пата кӳршĕ купери юлташ кĕчĕ те мана кăнтăрлахи апата ресторана чĕнчĕ.

— Атя пирĕнпе, Семен,—чĕнтĕм эпĕ кĕçĕн сержанта.

— Тавтапуç, эпĕ апатлантăм,—хирĕçлерĕ Семен.— Сăн-пичĕ ун пуçланнă калаçу пăсăлнăшăн кăмăлсăрланнă пек курăнчĕ. Вăл тăчĕ, китель тӳмисене вĕçертрĕ.

Эпир ресторантан таврăннă чухне Семен çывăратчĕ ĕнтĕ. Вăл çăмăллăн харлаттарни вакун урачисем ыйха ямалла пĕр евĕрлĕ тăкăртаттарнипе пĕр кĕвве кĕрсе илтĕнет.

«Кур, епле хуп турттарать,—халĕ ĕнтĕ манăн шăл йĕрме черет çитет.—Хăй вара вакунта çулланнă çынсем кăна çывăраççĕ тет. Çамрăк-ха, ытлашши çул çӳресе пиçнĕ çын пулас çук». Эпĕ унăн шуса аннă утиялне тӳрлетрĕм. Шурă тӳшек çитти айĕнчен йĕкĕтĕн хĕвелпе пиçсе пăхăр пек йăлтăртатакан пулнă хулпуççисем курăнаççĕ. «Амăшĕ мĕнле савăнать пулĕ çакăн пек ывăлпа!» ăмсантăм эпĕ унăн Апполлонăн пек хулçурăмне.

Эпĕ хам та кăшт выртса канасшăнччĕ çеç, Семен вăранчĕ. Вăл тăрса ларчĕ те айăпа кĕнĕн кулаçи турĕ. Эпĕ ăна асăрхамăш пултăм та, хамăн çӳлĕк енне çаврăнса, тем «шыракаларăм». Анчах Семен вăрахченименсе лармарĕ. Çамрăклăх вăл çынна хăвăрт хакласа пăрахма юрататъ те хăвăртах хăтăлатъ хăй шухăшĕнчен.

— Эсир акă «юлташ» тетĕр. Кашни çыннах юлташ теейместĕн-çке-ха.

Семенăн тем каласа парас кăмăлĕ пуррине туйса, эпĕ ăна хирĕç лартăм та вăл калаçнă чухне текех пӳлмерĕм вара сăмахне.

— Манпа пĕрле çарта манăн тахçанхи пĕлĕш Колька Степанов пур,—пуçларĕ вăл хăйĕн сăмахне.—Унпа эпир шкулта пĕрле вĕреннĕ. Пиллĕкмĕш класран пуçласа туслашса кайрăмăр — шыв сапса уйăраймăн! Пĕр чашăкран ĕçнĕ-çинĕ темелле, пĕр-пĕрин патĕнче те çĕр каçнă. Чăн та, пурнăçĕсем пирĕн кашнин хăйне расна йĕркеленсе пычĕç: унăн ашшĕ-амăшĕ çителĕклĕ пурнăçпа пурăнать. Манăн вара атте çук. Эпир аннепе иксĕмĕрех пурăнаттăмăр. Вăл телефонисткăччĕ, час-часах чирлетчĕ... Тен, сирĕншĕн ку выранлă калаçу мар пулĕ,—ыйтрĕ вăл сасартăк, хыпăнса ӳксе, унтан эпĕ кăмăлласах итленине кура, малалла каларĕ.—Эпĕ тăххăрмĕш класра вĕреннĕ чух анне вилчĕ. Эпĕ пĕчченех тăрса юлтăм. «Мĕн тумалла,—шухăшлатăп пушанса юлнă хваттерте пуçа чиксе ларнă май.—Ĕçе кĕрес пулать». Шкула та пăрахас кил-

мест. Тепĕр тесен, каçхи шкула çӳресе те вĕренме пулать. Çак вăхăтра Колька килет те, манăн ăша кĕрсе пăхса шухăшсене пĕлнĕ пекех, çапла калать: «Шкула çӳреме ан пăрах, пирĕн патра пурăнатăн, аттепе анне килĕшеç-çĕ». Эпĕ, ĕçĕ ăнăçман çын ĕçĕ ăнăçакан çын çине пăхнă пек, ун çине самай йĕрĕнчĕклĕн пăхса илтĕм. Аçу-аннӳпе калаçиччен малтан манран мĕн те пулин ыйтса пĕлтĕн-и эсĕ, тетĕп. Ăçтан пĕлетĕн-ха эпĕ сирĕн пата пырса пурăнасса, тетĕп... Эпĕ вĕсемпе калаçса татăлман, тет вăл. Вĕсем хăйсем çапла сĕнчĕç. Капла каласан, ман кăмăл кăшт çаврăнчĕ-ха, хам çапах кутăнлашатăп: пĕчĕк ача мар ĕнтĕ, хамах ĕçлесе тăранса пурăнма пултаратăп, тетĕп. Мĕн тесе-ха ман ют çын ĕнси çине чăрмав пулса тăйса ларас? Колька çилленсе кайрĕ: эсĕ шкула çӳреме пăрахатăн пулсан, эпĕ те пăрахатăп, тет. Ăçта кайăн ĕнтĕ эс, аннӳ пепки, тетĕп ăшра. Сăмахĕ вара Колькăн яланах татăклă: каларĕ — тăвать. Амăшĕ ăнсăр пулса ӳкнĕ, ашшĕ, сĕтел çине çапса, чышкине çĕмĕрсе пĕтернĕ. Колька пур — хăйĕннех перет: Семенрен, манран ĕнтĕ, мĕнпе чаплăрах эп, тет.

Семен пирус чĕртрĕ, пĕр çăмха кăвак тĕтĕм кăларса ячĕ, ăна сирсе, аллине сулкаларĕ, вара кăштах тăхтанă хыççăн малалла каларĕ:

— Кĕскен каласан, тепĕр темиçе кунтан эпир иксĕмĕр пĕрле пĕр заводрах ĕçлеме пуçларăмăр. Унăн ашшĕ хăех вырнаçтарчĕ пире. Кăнтăрла ĕçлетпĕр, каçсерен шкула чупатпăр. Колька çавăн пек хăтланни мана тĕлĕнтерсех пăрахрĕ. Чăн та, ку, тетĕп, юлташ! Чăн-чăн юлташ! Малтанах пĕр эрне майлă хама эп ун умĕнче айăплă пек туйса çӳрерĕм. Уншăн та ман мĕн те пулин анратса пăрахакан ĕç тăвас килетчĕ, анчах та май килмерĕ. Тӳррипе каласан, ман ун умĕнчеименесси-тăвасси часах иртсе кайрĕ. Колька, чĕмсĕрскер пулин те, тӳрĕ чунлă йĕкĕт...

Вăл кăшт чĕнмесĕр тăчĕ те çапла хушса хучĕ:

— Тӳрĕ чунлăччĕ. Унпа пĕрле яланах çăмăлччĕ. Пĕр-пĕрне ӳпкелемелли те, кӳренмелли те пулман. Часах пире, эпир тахçантанпах ĕçлетпĕр пек туйăна пуçларĕ.

Семен васкамасăр, сăмаха виçсе калаçать. Вăл ерипен пирус тĕпне сӳнтерчĕ те манран:

— Ну, мĕнле пек манăн ĕлĕкхи юлташ?—тесе ыйтрĕ.

«Ĕлĕкхи» тенĕрен, ачасем хушшинче тем сиксе тухнă пулĕ тесе шутларăм эпĕ. Семен хăйĕн калавне шăпах çавăн патнелле илсе пычĕ те.

— Мĕн калас, килĕшет мана Николай. Шанчăклă

юлташ. Унпа, кирлӗ пулсан, калла-малла шухӑшласа тӑмасӑрах тӑшмана хирӗҫ кайма пулать. Сайра тӗл пулакан ӗҫ тунӑ вӑл. Аспуҫпах тунӑ-и, ҫук-и...

— Ҫапла, ҫапла,—ман сӑмаха пӳлчӗ Семен.—Сайра тӗл пулаканни. Колька маншӑн тӑванран та тӑван пулса тӑчӗ. Чӑн та эпир, арҫынсем, хамӑрӑн сисӗм-туйӑма тулаш енчен питех кӑтартмастпӑр. Эпӗ, аслӑрах пулнӑ май, хӑшпӗр чух унран тӑрӑхласа та, кулкаласа та илеттӗм, кӑшкӑркалаттӑм та. Ашра, вара пичче-шӑллӑмран та хаклӑрах туяттӑм. Анчах кайран...—Семен кӑшт тӑхтаса тӑчӗ те ҫапла вӗҫлесе хучӗ:—Кайран эпир хирӗҫсе кайрӑмӑр...

Ҫапла каласан, йӗкӗт хӗрелсе кайрӗ. Ахӑртнех, ҫӳпӗренех пуҫланнӑ пуль хирӗҫӗвӗ.

— Эп каларӑм-ха, Колькӑпа эпир каҫхи шкула ҫӳреттӗмӗр,—малалла тӑсрӗ вӑл сӑмахне.—Пирӗнпе пӗр класра Нина ятлӑ хӗрача вӗренетчӗ. Вӑтам пӳллӗ хӑй, шурӑ сӑнлӑ. Куҫӗсем ҫырӑ та темӗнле пайӑркаллӑ-пайӑркаллӑ. Туслашса кайрӑмӑр эпир. Пур ҫӗрте те виҫҫӗмӗр ҫӳретпӗр. Хӗрӗ вӑл мӑн кӑмӑллӑччӗ те пирӗнпе хӑйне аслӑрах пек тыткалатчӗ, час-часах пире хӑтӑркаласа та илетчӗ. Эпир ӑна хисеплеттӗмӗр, ҫавӑнпа та вӑл тем каласан та кӳренместӗмӗр, тӳрленме сӑмах параттӑмӑр. Пирӗн туслӑх арҫын ачасен туслӑхӗн картинчен тухман. Кайран, каҫхи шкул пӗтерсе тухса хамӑра хамӑр ҫитӗннӗ ҫынсем пек туйма пуҫласан (ку тӗлте эпӗ йӑл кулса илтӗм: пулнӑ иккен ун чух «ҫитӗннӗ ҫынсем», халӗ те ача айванлӑхӗнчен хӑтӑлайман-ха), Нина ҫине эпир сасартӑк урӑхла пӑха пуҫларӑмӑр. Эсир ӑнланатӑр ӗнтӗ мана? Ӑна клубран киле ӑсатнӑ чух пирӗн унпа пӗрле ытларах тытӑнса тӑрас килетчӗ, уйрӑлас килместчӗ унран. Вӑл та ӗнтӗ чӑрсӑрланма пӑрахрӗ, лӑпланчӗ, пире текех сӑмах тӗкместь. Анчах иксӗмӗртен нихӑшне те хӑй патне ҫывхартмасть.

Ман ҫул юлташӗ каллех пирус туртса ячӗ. Пирусне те вӑл меллех тытаймасть, тӗтӗмне те йӑлтах ҫӑтмасть: туртма вӗренст кӑна пулас-ха.

— Вӑл Колькӑна юратнине сиснӗ пулсан, Нина маншӑн хаклӑ пулнине пӑхмасӑрах, эпӗ вӗсен ҫулӗ ҫинчен пӑрӑнаттӑм ӗнтӗ. Ман шутпа, вӑл та ҫавӑн пек тумалла. Анчах та кун пирки эпир сӑмах вакламан. Тӳррипе каласан, хамӑрӑн хушша-хуппа пӑсасран шикленнӗ. Уҫӑмлӑ марри, вут-кайӑк пекех, ҫӗлӗк айӗнче: унта темле илӗртӳллӗ вӑрттӑнлӑх, романтикӑлла япала пур...

Ку тĕлте Семен «пĕлĕт ҫинчен ҫĕре» анчĕ темелле.

— Эпĕ ытлашши лирикăна кĕрсе кайрăм пулас,—терĕ вăл.—Сире тĕп ĕҫрен аяккалла илсе кая пуҫларăм.

— Йĕркеллех пырать пек. Пĕлме питĕ кăсăк. Кайран мĕн пулчĕ вара?

— Кайран эпир салтака кайрăмăр. Пĕр подразделениех лекрĕмĕр. Служба пирĕн питĕ йĕркеллĕ пычĕ. Пире мухтатчĕҫ. Нина патне эпир кашни хăй тĕллĕн ҫыру ҫыраттăмăр. Вăл пире иксĕмĕре пĕр ҫыру ҫырать, конверчĕ ҫинче те икĕ хушамат лартать. Кăмăллăччĕ ҫав ҫырусене илсе тăма. Ун ҫырăвне иксĕмĕр пĕрле чухне кăна уҫатпăр. Ҫăта-ҫăта вулатпăр. Пурте чиперех пыратчĕ.

Анчах та пĕррехинче ҫапла пулса тухрĕ... Пĕлместĕп, тем ухмахланнă эпĕ ун чухне. Ытлашши мухтанăран сăмсана каҫăрта пуҫланă пулас... Кĕскен каласан, япăх вĕренме пуҫларăм. Занятисене хатĕрленместĕп, хам мĕн пĕлнисемпех ҫителĕклĕ-ха, теттĕм. Малтан, вăтам паллăсем курăнкала пуҫларĕҫ, унтан япăххисем те сиксе тухрĕҫ. Мана — командир патне, унтан — пухăва. Эпĕ пур, юпах тиха пек, ҫӳретĕп ĕрĕхсе ҫулне-йĕрне пăхмасăр. Колька та мана ятласа намăслантарма пуҫларĕ. Эпĕ вăл каланине хăлхана та чикмерĕм, пĕр хăлхаран кĕнĕ те тепринчен вĕҫсе тухса кайнă... Вăл вара мана мĕн турĕ тетĕр эсир?—ыйтрĕ Семен манран.

Эпĕ хулпуҫҫине кăна сиктерсе илтĕм.

— Вăл тытнă та Нинăна ҫырса пĕлтернĕ,—персе ячĕ Семен. Куҫĕсем унăн ҫилĕллĕн ялкăшса илчĕҫ.—Ун пек хăтланиччен, питрен ҫупса ятăр вăл эппин, вĕлтĕренпе ăшаласа илтĕр е тата... Пĕлместĕп ĕнтĕ, тата мĕн ырăрахчĕ. Мĕн тума Нинăна пĕлтермелле-ха.

Семен пĕр хушă шăпăртах ларчĕ.

— Нинăран акă ухмаха ăстăн парса ҫыру килет. Манăн ҫилĕ килсе кайрĕ, хирĕҫ ҫырмарăм. Колькăпа вара хирĕҫсе кайрăмăр.

Семен куҫ харшисене кичеммĕн туртăнтарчĕ, ик питҫăмарти палăрмаллах хĕрелсе тухрĕ. Ку намăсланни пулчĕ-тĕр. Нина умĕнче хăйĕн айăпне туйса намăсланать ĕнтĕ вăл. Ман ӳсĕмре ҫын ҫапла хăтланнисем йăлтах кăшт айванла курăнаҫҫĕ. Эпĕ Семен ҫине аташса тем ҫĕмĕрнĕ чарусăр ывăлăм ҫине пăхнă пек пăхса лартăм. Семеншĕн пулсан, ҫын сăн-пичĕ мĕншĕн улшăнни пачах шутра мар. Куҫĕсемпе ман ҫине тăрăнса, вăл усаллăн йăл кулса илчĕ те:

— Мĕнлерех ман Степанов юлташăм?—терĕ.

Эпĕ шухăша кайрăм. Паллах ĕнтĕ, Нина çырăвĕ Семен чунне самаях пырса тивнĕ. Вăл тӳрленнĕ, лайăх салтак пулса тăнă: апла мар пулсан, паян отпуска каяс çукчĕ. Тен, тĕрĕсех тунă пулĕ Николай Нина патне çырса ярса. Тем тесен те, Семен хăй каласа кăтартнă тăрăх, чылай аван çын сăнарĕ тухса тăчĕ куç умне.

— Семен, ман шутпа, сирĕн юлташăрпа мухтанмалла кăна. Чăн-чăн юлташ вăл.

— Эсир пирĕн командирпа калаçса татăлман пулĕ те? Иксĕр те пĕр çăвартан. Вăл та Степановпа çураçма сĕнет. Апла вăл лайăхскер, эпĕ — начар?

— Мĕншĕн туяна çапла пĕр вĕçĕнчен е тепĕр вĕçĕнчен яра-яра илмелле? Эсĕр те лайăх йĕкĕт. Анчах эсĕр темĕн пуç тавра çавăрсах çитерейместĕр. Шухăшлăр-ха, çамăл пулнă-ши Николая сирĕн çинчен Нинăна çырса пĕлтерме? Нина мĕн шухăшлама пултарнă?

Çак вăхăтра купе алăкне такам шаккарĕ.

— Кĕрĕр! — терĕм эпĕ.

— Станцие çывхаратпăр. Сирĕн анмаллаччĕ пулас, çар çынни юлташ, — терĕ проводник манăн çул юлташне.

Семен пуçтарăнма тытăнчĕ. Хăйне хӳтĕлекен сăмах кĕтсе илейменнипе вăл халĕ шăпăртах пулчĕ.

— Пырасси çинчен пĕлтертĕр-и? Хирĕç тухса кĕтсе илеççĕ-и сире?

— Çук, — тӳрккессĕн тавăрчĕ вăл, унтан çавăн пекех кĕнтеммĕн мана «телейлĕ çул» сунчĕ те тухрĕ. Эпĕ ун хыçĕнчен пытăм.

Пуйăс майĕпен-майĕпен чарăнать. Çумăрпа йĕпеннĕ перрон çинче, тĕкĕр çинчи пек, электричество çутисем йăлкăшаççĕ. Вакун кантăкĕсем умĕн тус-тăвансене кĕтсе илекен çынсен пит-куçĕсем вĕлтлетсе иртеççĕ. Семен вĕсем çине салхуллăн пăхса пырать. Сасартăк вăл чĕтренсе илчĕ, куçне чарса пăрахрĕ, пĕтĕм кĕлеткипе хĕлĕх пек карăнчĕ. Эпĕ мĕн те пулин ыйтса ĕлкĕриччен Семен, перрон çине сиксе анса, капюшонлă плащ тăхăннă вăтам пӳллĕ, шурă сăнлă хĕр патне çитсе тăма та ĕлкĕрчĕ.

— Курăр, ку вăл Нина, — терĕ вăл хыпăнса, ман пата вакуна вирхĕнсе. — Ун патне Коля телеграмма янă. Вăл — чăн-чăн çын! Сире те тавтапуç, юлташ!

Манăн Семенĕн аллине тытса чăмăртассăм, унăн вĕриленсе кайнă пуçне, ывăлăма пăчăртанă пек, кăкăр çумне тытса пăчăртассăм килчĕ. Анчах та пуйăс тапранчĕ, Семен хускалнă вакун çинчен сиксе юлчĕ те, Нинăпа юнашар тăрса, мана алă сулса ăсатрĕ.

# Хăюллă разведчик



Леонтьев килмерĕ-и?

— Çук.

— Вилчĕ иккен.

— Ĕненес килмест... Пулма пултараймасть.

Çакăн пек калаçу рота командирĕ Сивцов лейтенантпа взвод командирĕ Пичугин сержант хушшинче кунне темиçе хут та пулса иртет. Қашнинчех вара Сивцов, хумханса тата кулянса, блиндажа каять, Пичугин хăй вырăнĕнчех — тарăн окопра юлать.

Виççĕмĕш каç та çитрĕ. Тĕттĕмленсенех, рота командирĕ каллех Пичугин патне окопа пычĕ.

— Ирччен килмесен, вилнех тесе шутламалла пулĕ!— терĕ вăл.

— Темшĕн мана, аслă лейтенант юлташ,—ассăн сывласа илчĕ Пичугин,—Леонтьев пурнĕрех килес пек туйăнать. Фронтра пулсан та вилĕм лекмест ăна. Ăнăçлăскер вăл, унăн темĕнле талисман пур. Боря пысăк ĕç тупнă та çавăнпа тăхтать пулмалла...

— Вăхăтсăр шӳтлен,—çиллессĕн асăрхаттарчĕ Сивцов.—Мĕнле талисман тата?

Пичугин кулкаласа илчĕ.

— Мĕнле талисман иккенне хам та пĕлместĕп. Пуррине пурах вăл, ăна эпĕ шутласа кăларман. Вăл вĕт çаплаcкер, чăваш сăмахĕпе вырăс сăмахне хутăштарса темĕнле ăнланмалла мар калать тепĕр чух, çĕмĕрттер вара пуçна.

— Разведкăна каяс умĕн сана мĕн каларĕ вара вăл?

— Эпĕ ăна асăрханулларах пулма хушрăм. Вăл ман çине пăхрĕ те çапла каларĕ: «Эпĕ халĕ вилĕмсĕр Қощей пекех. Пуля тивмест мана. Ан пăшăрханăр, йĕркеллех таврăнатăп». Мана ку самаях тĕлĕнтерчĕ. «Мĕншĕн Қощей?»—Вăл çапла ответлерĕ: «Мана вилĕмрен сыхлакан пĕр япала пур. Вăрçă пĕтиччен, фашистсене çĕмĕрсе

тăкичченех сыхлать. Вăл маншăн талисман пекех». Эпĕ ăна кăтартма ыйтрăм. «Таврăнсан, тен, кăтартăп та»,— тесе çеç хучĕ.

Тата икĕ кун та икĕ каç иртрĕ. Леонтьев килмерĕ. Халĕ ĕнтĕ пурте, Пичугинсăр пуçне, ăна вилнĕ тесе шутларĕç.

— Шел... Çав тери шел. Мĕнле паттăр разведчикчĕ вăл Леонтьев,—куляннчĕç салтаксем.

Пиллĕкмĕш каçхине Сивцов хастарсен ушкăнне разведкăна ячĕ те хăй блиндажа кĕчĕ. Карттă сарса хучĕ те темĕн палăртма пуçларĕ.

Çур çĕр тĕлĕнче ура сасси илтĕнчĕ.

— Кĕме юрать-и?—хыттăн ыйтрĕ Пичугин.

— Кĕр,—ответлерĕ Сивцов, карттă çинчен куçне илмесĕр.

Малтан Пичугин кĕрсе тăчĕ, ун хыçĕнче тата тепĕр разведчик. Чĕпкуç çутинче рота командирĕ ăна тăруках палласа илеймерĕ.

— Кам унта санпа пĕрле?—ыйтрĕ вăл.

— Паллаймастăр-им, лейтенант юлташ?—терĕ те Пичугин сĕтел патнелле пăрăнса тăчĕ.

— Леонтьев?!

Рота командирĕ ваштах сиксе тăчĕ, аллисене малалла тăсрĕ.

Вĕсем пукан çине юнашар ларчĕç.

— Эпир вара санпа сывпуллашрăмăр,—терĕ Сивцов.

— Аннŭ патне, Кăмпал ялне çыру та çырса хутăм. Районне кăна пĕлеймерĕм. Чăваш республикинчен, анчах...

— Вăрнар районĕнчен эпĕ. Халь кирлех мар. Кăштах васкана эсир, лейтенант юлташ,—кŭренерех каларĕ Леонтьев.—Юрĕ ĕнтĕ, мĕн çинчен хыпарлас сире? Ĕçĕ яланхи пекех...—Чим-ха,—хыпаланса ŭкрĕ Борис,—малтан, акă, штаб документчĕсене, карттăсене илĕр.—Леонтьев хулпуççи çинчен сумкине илчĕ те командира пачĕ.— Çакăн пирки кая юлтăм, мур илесшĕ.

Леонтьев вара мĕнле пулнине каласа пачĕ.

...Пичугин ăна çĕрле ротăн сулахай флангне ăсатса янă.

— Ну, ăнăçлăх сунатăп сана, Боря. Ыран каçхине çакăнтах кĕтетĕп,—сывпуллашнă вăл юлташĕпе.

— Тавтапуç, кĕт.

Леонтьев путлăх урлă тăшман еннелле утрĕ.

Каç, тĕттĕм. Тăшман оборонин линине каçнине Ле-

онтьев хăй те сисмерĕ. Хыçра, сылтăмарахра, нимĕç пулемечĕ танлатнине илтсен тин вăл хăй тăшман позицине лекнине ăнланчĕ.

«Аван пуçланчĕ-ха»,—шухăшларĕ Боря.

Çапла шутлама çеç ĕлкĕрнĕччĕ — инçех те мар такам ӳсĕрни илтĕнчĕ. Леонтьев хăвăрт выртрĕ те автомачне ярса тытрĕ. Темиçе минутран ура сасси илтĕнчĕ. Борис каç тĕттĕмне тинкерсе пăхрĕ: тăшмана тĕл пулмалла марха унăн. Фриц ăна тĕкĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Унтан разведчик ура çине тăчĕ те, ним пулман пекех, хăюллăн малалла утса кайрĕ: калăн, тăшман патĕнче мар, тăван полк позицийĕнче тесе. Леонтьев маскировка халачĕ, нимĕç автомачĕ тата вуншар нимĕç сăмахĕ пулăшасса шанчĕ.

«Малтанлăха, ăнсăртран, тĕл пулсан, ку çителĕклĕ,—шутларĕ вăл.—Пулăшаймасан — автомат хăтарать».

Ир енне Боря çыхăну линине тупрĕ. Тăвата хĕрлĕ проводлă кабель вăрман уçланкинчен инçех мар сăрт çинелле тăсăлать. Паллах, унта тăшман подразделенийĕн штабĕ.

«Ķăсăклă ĕç кĕтет сана, Леонтьев юлташ,—терĕ хăйне хăй разведчик.—Штабпа «паллашмалла». Çăмăл мар ку, пилме те пулать, анчах хăтланса пăхмаллах».

Боря хăвăртрах утма пуçларĕ. Çутăличчен вăрмана çитсе кăнтăрла сăнама меллĕ те шанчăклă вырăн тупмалла. Ķаçхине вара — ĕçе пикенмелле.

Вăрманта вăл пĕр кивĕ окоп шыраса тупрĕ, унта туратсем пăрахрĕ те хăйне валли «йăва» турĕ. Иртен пуçласа каçчenex вăл унтан тухмарĕ, йĕри-тавралла сăнарĕ. Ķаç пулсан вара Леонтьев асăрханса уçланкăри сăрт патнелле шуса кайрĕ. Анчах ирхине каялла шума тиврĕ — усси пулмарĕ, нимĕç офицерĕсем, связнойĕсем çĕрĕпех блиндажран блиндажа çӳрерĕç, штабпа юнашар салтаксем лав çине темле япала тиерĕç.

— Вăрманта сивĕпе хĕртĕнме лекрĕ вара,—каласа парать Леонтьев.—Анчах, шутлатăп ăшăмра, ĕмĕтленнĕ ĕмĕте пурнăçламасăр пурпĕрех кунтан каймастăп. Кĕтетĕп хайхи меллĕ саманта, штаба куçран вĕçертместĕп. Ĕнер каçхине, вырсарникун умĕн, тинех кĕтсе илтĕм... Фрицсем ĕçсе тултарчĕç, эпĕ те вара махха памарăм. Вĕсем блиндажран тухсан, кушак пек вирхĕнтĕм унта. Пăхатăп — кĕтесре вичĕ сумка çакăнса тăрать. Илтĕм те, шăппăн каялла, часовой çумĕнчен нимĕç тумĕпе ним пулман пекех иртсе кайрăм. Акă, пĕрне илсе килтĕм — кир-

лине. Штаб начальникĕн пулмалла... Батарея ăçта вырнаçнине вара, лейтенант юлташ, йăлтах каласа парăп тата карттă çинче кăтартăп.

Сивцов савăнса кайрĕ.

— Орден пама тăрататăп, ыранах,—терĕ те рота командирĕ Пичугин çине пăхса илчĕ.—Апла пулсан, эсĕ тĕрĕс каларăн иккен.

— Çапла, килессĕнех туйăнчĕ. Леонтьевăн яланах ĕçĕ ăнса пырать вĕт,—терĕ Пичугин.

— Чим-ха, эсĕ тата темле талисман çинчен каларăн. Тĕрĕс-и ку?

— Борис хăй ответлетĕр.

«Талисман» сăмаха илтсенех, Борис сăнĕ улшăнчĕ, тĕксĕмленчĕ. Гимнастерка кĕсйинчен вăл пĕчĕк сăнÿкерчĕк туртса кăларчĕ те ăна Сивцова пачĕ.

— Акă вăл ман талисман. Эсир курнă ăна.

Сивцов сăнÿкерчĕкĕ çине пăхрĕ, унăн тепĕр енне çырнине сасăпа вуларĕ: «Йывăр килсен хăвăн вată аннÿне аса ил».

* * *

Çак харсăр каччăна эпĕ ачаранах лайăх пĕлеттĕм. Вăл мана шыва путасран çăлнăччĕ. Унпа пĕрле эпĕ Хăмăшри çичĕ çул вĕренмелли шкула çÿренĕ. Кунтах пионера, каярахпа комсомола кĕнĕ. Вĕренсе тухнă хыççăн вăл агроном пуласшăнччĕ. Анчах вăрçă пире фронтсем тăрăх салатса ячĕ. Çапăçура та вăл хăюллă та паттăрскер пулнă. Шел, пурнăçне сыхлаймарĕ Боря, пĕр хаяр кĕрешÿре вăл паттăр вилĕмĕпе вилчĕ. Кăмпал çыннисем ăна халĕ те ырăпа асăнаççĕ.

# Гварди рядовойĕсем



Шартлама сивĕ каç. Сас-чĕв çук. Уйăх çутинче шурă юр йăлкăшать. Умри окопсене пытаннă тăшман вăхăт-вăхăт ракетăсем ярса çутатнине шутламасан, купта пурте — пилĕк таран юрпа витĕннĕ тĕмсем те, тӳремлĕхре палăракан тӳпемсем те, çăлтăрлă пĕлĕт те, ĕшеннĕ çынсем те — канлĕн тĕлĕреççĕ теме пулать.

Анчах ку вăл чăн-чăн шăплăх мар çав. Кашнин хăлхинче çаплах ĕнерхи шав тăнă, окопсемпе землянкăсенче сивĕ стенасем çумне таянса тĕлĕрекен салтаксене ĕнерхи çапăçу халĕ те чарăнман пек туйăннă. Акă, сăмахран, гварди рядовойĕ Анатолий Павлов та, çав хаяр çапăçура виçĕ гитлеровеца штыкпа тирсе пăрахнăскер, тăшманран туртса илнĕ блиндажра ыраш кĕлти çине выртнă-выртманах çывăрса кайсан, тĕлĕкре те çаплах штыкне вылянтарнă-и, тен. Наводчик Каргин ефрейтор та, ыйхипе аташса, тăшманăн лăпланман дзотне тĕллесе пемешкĕн çĕнĕ прицел лартма хăтланнă пулас, пехотинецсене çапла кăшкăрнă: «Атьсемĕр, малалла! Хăвăртрах! Вăйлăнрах!..»

Гварди кĕçĕн сержанчĕн Петр Налетов пулеметчикăн ыйхă килмен. Унпа юнашарах иккĕмĕш номер Леонид Нечипорук чĕлĕм мăкăрлантарса ларнă. Ахаль чухне халап çапма юратаканскер, халĕ вăл плащпалаткăпа пĕркеннĕ те вĕçĕмсĕр табак туртнă. Сăмах чĕнмен.

Налетов сасартăк ун енне çаврăнчĕ те, юри тарăхтарас шутпа-ши, çапла каларĕ:

— Артемьевич, тĕлĕрме юрамасть. Кунга, ачамккă, малти лини, хăвăр патри Белорецкри заводра мар. Кăшт тĕлĕрсе кайсанах, тăшман персе çитет. Вара мĕн пулĕ?

Нечипорук кăшт хускалса илчĕ те ассăн сывласа ячĕ:

— Эсир хăвăра хăвăр пĕлĕр, маншăн ытлашши ан пăшăрханăр. Эпĕ, кирлех пулсан,—вăл чĕлĕмне кĕсйине

чикрĕ,—вунă каç пĕр çывăрмасăр чăтма пултаратăп.

— Эппин, мĕншĕн тата çăварна шыв сыпнă пекех сăмах та чĕнместĕн?

— Кӳрентерчĕç-ха, Петя,—терĕ Леонид Артемьевич,—мĕн службăна килнĕренпе те мана çак шăпăрлан пек никам та тарăхтарманччĕ.

— Кам-ши вăл?

— Хушаматне мантăм-ха. Мĕн ятлăччĕ-ха вăл? Санăн земляку, чăваш...

— Толя Павлов-и?

— Савă çав.

— Мĕн турĕ вăл сана, Артемьевич?

Çăматтисене чăптапа чĕркенĕ май Нечипорук сăмахне малалла тăсрĕ:

— Ялта касхи апат çинĕ чухне вăл ман пата пычĕ те кашăк ыйтрĕ. Эпĕ, яшка çисе лараканскер, ăна çапла каларăм: кашăку та çук пулсан, мĕнле салтак вара эсĕ. Памастăп, терĕм эпĕ, туп хăвăнне. Хам çапах та ăшăмра урăхла шухăшлатăп: кăшт тăхтатăр-ха, çисе тăранатăп та акă, парăп. Вăл пур, ман ачи, çывăхарах пычĕ те, мана хулпуççинчен çапса илчĕ:

«Эх, Леонид Артемьевич, тĕшмĕш çын эсĕ, Хĕрлĕ Çар воинĕ мар. Хăвăншăн çеç тăрăшакан мужик. Эсĕ — кивĕ тĕнче элеменчĕ»,—тесе хучĕ. Çыпăçрĕ те ман çумма, темĕн те пĕр каласа пĕтерчĕ. Шăп çав вăхăтра таçтан Левченко сиксе тухрĕ, парторг. Павлов ăна та каласа пачĕ: «Парторг юлташ, тет, акă пирĕн Нечипорука курсамăр, ăна пĕрре тăн памаллах. Вăл чăн-чăн тĕшмĕш чăпти, пĕрре те парти çынни пек мар». Павлов, çапла каласан, алăри кашăкăм ман лаштах тухса ӳкрĕ. Вăл пур, шельмă ачи, нимĕн те пулман пекех йăл кулса илчĕ те, шăхăрса малалла кăна уттарчĕ.

— Çапла вăл-Павлов, ун пек хăтланма пултарать,—терĕ Налетов, Нечипорук хăйĕн кӳренĕвĕ çинчен каласа пĕтерсен.

Вĕсем иккĕшĕ те пĕр самант чĕнмесĕр тăчĕç, унтан Налетов каллех сăмах хускатрĕ:

— Леонид Артемьевич, пĕлетĕн-и, ман сана мĕн сĕнессĕм килет. Партие кĕмелле санăн, кандидата. Вăт ун чухне пăхтăр та тĕлĕнтĕр Павлов. Эпĕ сана пĕр сăмахсăр рекомендаци пама килĕшетĕп. Ыттисем те килĕшĕç. Ыйт кăна. Чăннипе калатăп, шухăшласа пăхсам, Артемьевич. Кăтартса пар ăна ху тĕшмĕш çын маррине, Павловран

та çирĕп партиец пулнине. Çынни эсĕ, паллах, пирĕн шанчăклă, çамрăкраххисенчен хăюллăрах çапăçатăн — ахальтен мар сана икĕ медаль пана. Чăн та, мĕншĕн-ха санăн парти ретне кĕмелле мар?

— Кам илет мана унта?—Леонид Артемьевич аллине сулчĕ.—Нечипорук, мĕншĕн эсĕ партие кĕме тин çеç шут тытрăн, тесе ыйтсан? Мĕн калас ман? Çук, ку вăл çăмăл ĕç мар, Петя.

Нечипорук шăпланчĕ те чĕлĕмне тултарчĕ. Анчах туртса ямa ĕлкĕреймерĕ. Таçта инçете, сайран çутăлакан ракетăсем çине тинкерсе пăхакан Налетов шăппăн хушрĕ:

— Леонид Артемьевич, пулемет патнерех килĕр. Лентăсен коробкине çывăхарах хурăр.

Плащ-палаткăна айккинелле ывăтса, Нечипорук лентăсен коробкисене пулемет çумнерех хучĕ те, кĕçĕн сержантпа юнашар выртрĕ.

— Разведка пулас,—терĕ вăл, пирĕн малти линипатнелле пĕр сас-чĕвсĕр шуса килекен гитлеровецсен пысăк ушкăнне асăрхаса.—Ха, вĕсем, каяннăйсем, каллех пирĕн пата килеççĕ. Ĕнер шăлĕсене катнине манчĕç пулас ĕнтĕ.

Ку вăл, чăн та, тăшман разведчикĕсен ушкăнĕ пулнă иккен. Вĕсем çур çĕр иртсен, таврана тĕтре хупăрласан, ĕçе тытăнчĕç.

— Чее, мур илесшĕсем,—терĕ Налетов.—Çул та, сукмак та çук çĕртен иртсе кайма шут тытнă.

Вĕсем çывхарсах çитсен, Налетов вăрăм черет кăларса ячĕ. Фрицсем юр çине сапнă пăрça пек чăл-пар саланчĕç. Хăшĕсем вĕтлĕхелле тарчĕç те автоматран пеме тытăнчĕç, теприсем пулемета сылтăмран хупăрласа илесшĕн пулчĕç. Налетов пĕрре вĕтлĕхрисем çинелле, тепре хупăрласа илесшĕн тапăçакансем еннелле перет. Нихăшне те чĕррĕн вĕçертесшĕн мар.

Гитлеровецсем вăйлăнрах пеме пуçларĕç. Тепĕр вăхăтран сывлăшра минăсем шăхăрни илтĕнчĕ — оборонăра тăраканнисем пулăшаççĕ пулас ĕнтĕ. Унтан артиллери те ĕçе тытăнчĕ.

Халĕ ĕнтĕ ку çапăçуллă разведка пулни уççăнах палăрчĕ.

1944 çулхи апрелĕн 3-мĕшĕнчи çĕрлехи çак çапăçура гвардин кĕçĕн сержанчĕ Петр Михайлович Налетов, Шăхасан районĕнче çуралса ӳснĕскер, геройла вилĕмпе вилчĕ. Вилес умĕн ăна Нечипорук, Винница облаçĕнчен килнĕскер, хăйĕн тăван ывăлне тытнă пекех алăра çĕклесе тăчĕ.

— Мĕнле пулса тухрĕ-ха ку, Петя?—шăппăн сăмах хушрĕ Леонид Артемьевич.—Чăтсам, тусăм, санăн пурăнас пулать вĕт.

— Артемьевич...—аран-аран сасă кăларчĕ Налетов.— Пулемета никама та ан пар... ху хуҫа пул... ман аннене Варвара Алексеевна Алексеевăна ҫырса пĕлтерсем...

Ҫапла Нечипорук хăйĕн аслă юлташĕсĕр тăрса юлчĕ. Тепĕр кунхине рота командирĕ унран кама пулемет расчечĕн пĕрремĕш номерне лартма килĕшетĕн тесе ыйтсан, Леонид Артемьевич хумханса ответлерĕ.

— Пĕрремĕш номерĕ эпĕ хам пулатăп. Петр Налетовшăн тавăрас тетĕп.

Вара Нечипорук Налетов вырăнне йышăннă. Иккĕмĕш номере рота командирĕ Анатолий Павлова уйăрса лартнă. Ҫакă Леонид Артемьевича хăратса пăрахнă. Чăн та, кун пирки вăл рота командирне шарламан, анчах Павлова сиввĕн кĕтсе илнĕ. Лешĕ килсенех, ăна кулкаласа юриех ҫапла пĕлтернĕ:

— Гварди рядовойĕ Нечипорук юлташ, эпĕ сирĕн командованине килтĕм.

Леонид Артемьевич ун ҫине сиввĕн пăхса илнĕ те ҫийĕнчех тавăрса хунă:

— Апла, эппин. Питĕ хавас. Юрать, гварди рядовойĕ Павлов. Малтанлăха пулемета тасатар-ха. Унтан эсир мĕнле пеме пултарнине тĕрĕслĕп.

Павлов ротăра пурте хисеплекен салтакпа Артемьевичпа пĕрле ҫапăҫма тивнишĕн савăннă. Вăл хăвăртрах ĕҫе тытăннă: пулемета васкаса пăсса тăкнă, шăлса тасатнă, пухса лартнă.

— Пулемет йĕркеллĕ,—пĕлтернĕ салтак Нечипорука.—Ҫапăҫăва хатĕр.

— Ну-ка, персе пăх-ха,—хушнă Леонид Артемьевич.— Ҫав юпана тĕлле.

Павлов сăнавлă черет панă. Юпаран пур еннелле те вĕтĕ турпас сирпĕннĕ.

— Ҫитĕ,—приказ панă Нечипорук, Павлов Артемьевичран хăйĕнчен те аванрах пеме пултарнине асăрхаса.

Ҫакăн хыҫҫăн Нечипорукăн тата ҫирĕпрех те хумхантаракан ҫĕнĕ туслăх пуҫланса кайнă. Ҫур уйăх иртсен марш вăхăтĕнче вăл, кăмăлне кăшт ҫемҫетнĕ те, Павлова ҫапла каласа хунă:

— Юрĕ, ун чухне эсĕ, анчăк ҫури, мана питех те кӳрентертĕн пулин те, сана эпĕ йăлтах каҫаратăп. Йăлтах. Пулнă-иртнĕ тейĕпĕр.

Павлов ăшшăн кулса янă.

— Эпĕ ăна хăвна юратса çеç вĕт...

Налетов вилнĕ хыççăн унăн канашĕсене Нечипорук час-часах аса илнĕ. Пĕррехинче вара, марш вăхăтĕнче Павловпа юнашар çуна хыççăн утса пынă чухне, вăл хăйĕн чунне уçнă.

— Петр Налетов партире тăратчĕ,—пуçланă вăл.— Эпĕ ун вырăнне йышăнтăм ĕнтĕ. Манăн та партие кĕмеллех. Эсĕ, мĕн, вырăсла манран лайăхрах пĕлетĕн, çырса парсам мана заявлени.

Пĕрре тĕлĕннĕ, тепре савăннă Анатолий Павлов, çавăнтах лашасене тăратнă.

— Артемьевич, атя-ха пирĕн Хăмăш табакне туртса ярар. Лар кунта.

Нечипорук чĕлĕмне тултарнă, иккĕшĕ те мăкăрлантарса янă.

— Эппин, партие илме ыйтса заявлени парасшăн?— тенĕ Павлов.—Лайăх ку, Артемьевич. Çырса паратăп.— Кремле ярса парас пулсан та намăс ан пултăр. Эсĕ çынни тĕрĕс çулпа утатăн. Сирĕн пек чыслă та тĕрĕс çынсемпе ĕнтĕ парти вăйлă. Вĕсем — унăн тĕрекĕсем.

Анатолий Павлов тилхепине кăрт-карт турткаларĕ. «Атя!»—тесе лашисене шуйхатрĕ те, çунасем малалла шурĕç.

## ТУПМАЛЛИ

Шавлăр, хурамасем! . . . . . 3
Евгений Михайлов, Совет салтакĕ . 36
Сенкер пакунлисем . . . . . 42
Шухă йĕкĕт . . . . . . 48
Хăюллă разведчик . . . . 55
Гварди рядовойĕсем . . . . . 59

*Для детей среднего и старшего школьного возраста*

Николаев Антип Николаевич

**Шумите же, вязы!**

Очерки

На чувашском языке

Редактор **Р. М. Митрушкина**
Художник **Л. Я. Павлов**
Художественный редактор **С. А. Владимиров**
Технический редактор **А. Ф. Никитина**
Корректор **Л. А. Иванова**

НТ 17668. Сдано в набор 20/X-1972 г. Подписано к печати 11/VII-1973 г. Изд. № 99/73 г. Формат 84×108/32. Бумага типографская № 3. Физ. печ. л. 2,0. Усл. печ. л. 3,36. Учетно-изд. л. 3,28. Заказ № 5105. Тираж 6000 экз. Цена 11 коп.

Чувашское книжное издательство, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР.
Чебоксары, Володарского, 5.

Цена 11 коп.

